К 84.09(=Чув)
У 84
Ч-39939

Геннадий УТКИН

ПĂТĂРМАХ

калавсем
шӳтсем
пулни-иртни

Национальная библиотека ЧР
4-039939

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

М т 3 3835 Т 5000 1989г

У84

Геннадий УТКИН

ПĂТĂРМАХ

калавсем
шӳтсем
пулни-иртни

Шупашкар
2005

ДАРСТВЕННЫЙ ЭКЗ.

ПРОВЕРЕНО
20 10

Ч-39939

НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Геннадий УТКИН

ПĂТĂРМАХ

Калавсем, шӳтсем, пулни-иртни

ШУПАШКАР
2005

УДК 821.512-111
ББК 84 (2 Рос-чув) 6-4
У 84

Уткин Г.А.
У 84. ПӐТӐРМАХ. Калавсем. Шӳтсем. Пулни-иртни. Шупашкар, “Калем” издательство, 2005 ç. 60 стр.

Кӗнекере Раççей Писателӗсен союзӗн членӗн юлашки çулсенче çырнӑ калавӗсемпе шӳчӗсем, пурнӑçра пулни-иртни çинчен çырнисем пичетленнӗ.

© Уткин Г.А.
“Калем” издательство

АВТОР ÇИНЧЕН

Геннадий Алексеевич Уткин 1945 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнче Комсомольски районĕнчи Тукай ялĕнче колхозник çемйинче çуралнă. Ялти пуçламăш шкул хыççăн Çĕнĕ Мăратри тата Аслă Чурачăкри шкулсенче вĕренсе вăтам пĕлӳ илнĕ. Саккăрмĕш класра чухнех районти "Октябрь ялавĕ" хаçата çырма пуçланă.

Специальноç иличченех вăл Елчĕк тата Патăрьел хутлăхĕнче пуçламăш классен, чăваш чĕлхипе литература учителĕ пулса ĕçленĕ, 1964-1967 çулсенче Совет Çарĕнче хĕсметре тăнă.

Çартан таврăннă хыççăнах Геннадий Уткин Комсомольски район хаçатĕнче литература сотрудникĕнче ĕçлеме тытăнать. Çур çултан ăна тĕп редактор çумĕ пулма çирĕплетеççĕ. Ĕçрен уйрăлмасăр вăл Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультетне вĕренме кĕрет, 1971 çулта ăна Чулхулари партин аслă шкулне куçăмлă майпа вĕренме яраççĕ. 1975 çулта тăван районĕнчи "Октябрь ялавĕ" хаçатăн тĕп редакторĕнче ĕçлеме тытăнать, çак ĕçре 1988 çулччченех тăрăшать. 1988-1989 çулсенче Г.Уткин райĕçтăвкомăн халăха вĕрентес ĕç пайĕнче методистра, Комсомольскинчи вăтам шкулта вырăс тата чăваш чĕлхисемпе литературисен учителĕнче ĕçленĕ. 1989 çулхи апрель уйăхĕнче ăна КПСС Комсомольски райкомĕн пĕрремĕш секретарьне суйланă. 1992 çулта Геннадий Уткин Шупашкара пурăнма куçать, "Хресчен сасси", "Республика" хаçатсенче пай редакторĕнче, Патшалăх Думин депутачĕн пулăшаканĕнче ĕçлет. 1998 çултанпа вăл – профсоюзсен республикăри Совечĕн "Время" хаçачĕн тĕп редакторĕ.

Геннадий Уткин литература ĕçне çамрăклах пуçăннă, район хаçатĕнче, "Тăван Атăл", "Капкăн" журналсенче очерксем, калавсем, юморескăсем, мемуарсем пичетленĕ. 2001 çулта унăн пĕр харăсах "Ют пахчара" тата "Пуç çинчи пуртă" кĕнекисем пичетленсе тухрĕç. Геннадий Алексеевич Уткин 1979 çултанпа СССР Журналистсен союзĕн, 1997 çултанпа Раççей Писателĕсен союзĕн членĕ. 1997-2001 çулсенче вăл обществăлла майпа Чăваш Республикинчи Писательсен союзĕн правленийĕн председателĕн çумĕ пулса ĕçленĕ. Г.Уткина çичĕ хутчен Комсомольски район Совечĕн депутатне суйланă, 1990-1995 çулсенче вăл Чăваш Республикин халăх депутачĕ пулнă. Геннадий Алексеевич литература ĕçне пĕр самантлăха та пăрахмасть, халĕ вăл çĕнĕ калавсем, повеçсем çырать.

КАНТĂК УМĔНЧЕ

Евгений Иванович Просвирнов, ним тума аптранипе, пысăк пӳлĕм кантăкĕнчен урамалла пăхса тăрать. Паян – шăмат кун, ĕçе каймалла мар. Просвирнов райцентрти кантурсенчен пĕринче хут ĕçĕпе аппаланать. Çирĕм çула яхăн ĕнтĕ вăл çав ĕçре. Службăра чухне вăхăт хăвăрт иртет. Шăмат кунсемпе вырсарни кунсенче – аптриш! Шашка-шахмат вăййине кăмăлламан, хаçат-кĕнеке тытса ларма юратман Просвирновшăн канмалли кун – чăн-чăн тамăк. Сенкер экран умне ларĕччĕ – телевизорĕ çĕмĕрĕлнĕ. Картишĕнче сысна çурисĕр пуçне урăх нимĕнле выльăх та çук унăн. Ăна апат тухса пама пулĕччĕ – арăмĕ шанмасть. Ларать вара кил хуçи кунĕ-кунĕпе кантăкран пăхса. Унăн тулашĕнчен кирпĕчпе сăрнă щитлă çурчĕн чӳречисем нумай. Пĕринчен пăхса йăлăхсан тепринчен пăхма пулать.

Щитлă çурт тенĕрен Просвирновсен Карл Маркс урамĕнче çур касă – çакăн пек çуртсем. Пурте пĕр еверлĕ. Юнашар Фридрих Энгельс урамĕнче те çакăн пек çуртсемех. Пĕрне тепринчен уйăрса илейместĕн.

Евгений Иванович кантăк умĕнчен пăрăнса кайма кăна тăнăччĕ – хăйсен умне "Москвич" çитсе чарăннине асăрхарĕ. Машинăран "Кулине патĕнче" хулах хуçи Свечкова тата унăн упăшки Никодим тухрĕç. Вĕсем багажнике уçса теменле япала тултарнă тулли миххе мекеçленсе туртса кăларчĕç, ăна Просвирнов пурăнакан çурт еннелле йăтса каçарчĕç. Хулах хуçи пирĕн лата кĕрес çук-ха тесе Евгений Иванович кантăк умĕнчен пăрăнчĕ те диван çине тăсăлса выртрĕ. Килте вăл пĕчченех, арăмĕ йăпăртлăха кӳрше каçнă. Вăл халь-халь киле таврăнмалла.

Çавӑнпа алӑк сассине илтсен те Просвирнов ал-хапӑл тӑрса тухмарӗ. Ют хӗрарӑм сасси кӑна ӑна диван çинчен çӗклерӗ. Пӳлӗм алӑкне Акулина Свечкова хӑй уçрӗ. Унӑн аллинче тӑсмака конверт. "Хуçисем килте-и, кӗме юрать-и?" – хӗрарӑмӑн çепӗç сасси илтӗнчӗ. "Кӗрӗр, кӗрӗр, иртӗр малалла", – терӗ кӑна Просвирнов, тӑсмака конверт Свечкова аллинчен Евгений Иванович аллине куçма та ӗлкӗрчӗ. "Ку конвертра – вун икӗ пин тенкӗ, хаклӑ Георгий Петрович, тепӗр виçӗ пинне, хамӑр калаçса татӑлнӑ пекех, çитес эрнере илсе килетӗп. Верандуна пӗр михӗ шурӑ çӑнӑх кӗртсе хутӑмӑр, прихожӑйри хут ещӗкре – тушонка", – чӗвӗлтетрӗ "Кулине патӗнче" хупах хуçи. «Паллашар эппин. Райадминистрацин культура пайӗнче ӗçлетӗп. Евгений Иванч тесе чӗнеççӗ. Георгий Петрович мар эпӗ. Георгий Апостолов, налук инспекторӗ, юнашар урамри щитлӑ çуртра пурӑнать. Картишӗнче унӑн хаяр йытӑ пур», – рапортларӗ Просвирнов. Мӗн пулнине ӑнланса илнӗ Свечкова карт! туртса илчӗ Евгений Иванович аллинчи конверта. "Каçарӑр, каçарӑр!" – текелесе картишне тухмалли алӑк патне талпӑнчӗ, прихожӑйри пушмакӗсене хывса тӑракан упӑшкине – Никодима – чут тӗксе ӳкермерӗ. "Хӑнчӑр куç. Райцентрта кам ӑçта пурӑннине те пӗлместӗн. Ют çӗре лекнӗ эпир!" – сӑрхӑнса тухрӗç кӑнттам сӑмахсем хӗрарӑм çӑварӗнчен. Аптӑраса ӳкнӗ Никодим Свечков пушмакне тӑхӑнма та ӗлкӗреймерӗ, арӑмӗ ӑна алӑкран тӗртсе те кӑларчӗ. "Эппин Апостолов инспектор хупах хуçи касса аппарачӗсӗр ӗçлесе ларнине чӑнах та тупса палӑртнӑ-мӗн, анчах акт тавраш çырман иккен. Ӗç шитӑ-крытӑ пултӑр тесе сӗтев пирки калаçса татӑлнӑ", – кӳршӗ-аршӑран ӗнерсенче илтнӗ сӑмах чӑн пулнине тавçӑрса илчӗ Просвирнов. Унччен те пулмарӗ, урама чӑлха вӗççӗнех тухса кайнӑ Никодим каялла персе çитрӗ, пушмакне тата тушонка банкисем хунӑ ещӗке йӑтса машина патне лӑпӑстатрӗ. Тепӗр самантран вӑл верандӑри çӑнӑх миххине те мекӗрленсе йӑтса тухрӗ. Свечковсем ларнӑ "Москвич" Энгельс урамне пӑрӑнса кӗриччен те Просвирнов кантӑк умӗнчен каймарӗ.

ХӖЛИП МАНА ХӐНА ТУРӖ

Хӗлип Сикорова эпӗ чылайранпа пӗлетӗп. "Чӑвашшӑвӑçтреста" пӗрле те ӗçлесе курнӑ. Эпӗ нормировщикчӗ, вӑл – шӑвӑçран япаласем ӑсталакан маçтӑр. Ятӑмӑрсем çынсенни пек марри те çывӑхлатрӗ пулмалла. Ӑна Филипп Филиппыч тесе чӗнеççӗ. Эпӗ – Харитон Харитоныч.

Пĕр виçĕ çул каялла “Чăвашшăвăçтрест” хупăнса ларнипе пирĕн унтан тухса каймалла пулчĕ. Эпĕ аран-аран пĕр кантура бухгалтера вырнаçрăм, Хĕлип Сикоров Мускава шапаша çӳрет. “Çĕнĕ пуянсем валли дачăсем тăватпăр, укçа нумай çапса килетпĕр”, – каласа парать тĕл пулсан.

Хальхинче çĕнĕ паспорт илме кайсан курнăçрăмăр. Иксĕмĕрĕн те кăкăр кĕсийисенче икĕ пуçлă ăмăрт кайăклă паспорт.

– Çумалла пулать ĕнтĕ кăна, – нимĕн калама аптăраса сăмах хушрăм эпĕ.

– Икĕ пуçлă ăмăрт кайăка мĕн çумалли пур! Патшасен гербĕ вĕт вăл. Ыран – праçник, çĕр-шыва хӳтĕлекенсен кунĕ. Эс салтакра пулнă. Çав ятпа пĕрре хăна тăвам-ха сана, – терĕ Хĕлип.

“Кăнтăр каçĕ” кафене кĕтĕмĕр. Хĕлип çĕр аллăшар грамм шурă эрех, пулăпа сухан хунă икĕ бутерброд илчĕ. Ĕçрĕмĕр. Çыртса ятăмăр.

– Мускав пуянĕсем питĕ хытă. Нумай ĕçлеттереççĕ. Çапах чăвашсене юратаççĕ. Çурчĕсене-дачисене арча пек туса паратпăр. Пирĕншĕн укçине хĕрхенмеççĕ, – кăштах хĕрнĕ май чĕлхине йӳле ячĕ манăн пĕлĕшĕм.

Каферен тухас тесе çĕкленнĕччĕ, Хĕлип мана çанăран карт! туртса каялла лартрĕ.

– Мĕн вăл ахаль бухгалтер укçи! Çӳретĕн пуль-ха ĕнтĕ эсĕ халь кашни пусна шутласа, – кӳреннĕ пек каласа хучĕ Сикоров.

– Эх, Сикоров-Киркоров, мана петьняк вырăннех ан хур-ха. Эс мана хăналарăн, халь эп сана сăйлатăп, – çапла каласа стойка патне васкарăм хам.

Икçĕршер грамм тата шăрттан бутерброчĕ пире чухах пулчĕ. Тухрăмăр каферен. Пыратпăр урампа утса.

– Ку урамра манăн питĕ çывăх пĕлĕшсем пурăнаççĕ. Кĕрсе тухар-ха çавăнта, – тет Хĕлип.

Кĕтĕмĕр. Хваттерĕнче виçĕ ар çынпа виçĕ хĕрарăм. Тахăшĕ амăшĕ, тахăшĕ хĕрĕ, тахăш йăмăкĕ – нимĕн те пĕлме çук. – Эрех илме тухса кĕрсен лайăхчĕ те, укçам сахал, – пăшăлтатать мана хăлхаран Хĕлип.

Ик çĕр тенкĕ кăларса тыттартăм. Юлташăм пĕр ар çыннине ертсе тухса кайрĕ, икĕ кĕленче эрех, çыртмаллисем илсе килчĕ. Ар çыннисене ĕçме юрамасть имĕш, хĕрарăммисем “янк! та янк!” тутараççĕ. Ар çыннисене кил сыхлама хăварса виççĕшĕ те пире ăсатма тухрĕç. Çула май “Ирхи сывлăм” ресторана кĕрес терĕмĕр. Хĕрарăммисем Хĕлипе ним вырăнне те хумарĕç, шавах ман йĕри-

тавра яваӑнчӗҫ. Тем самантран пирӗн ҫума тата тепӗр палламан ар ҫын пырса ҫулӑхрӗ. Улттӑн пултӑмӑр. Икӗ сӗтеле пӗрле туртса лартма тиврӗ. Мана мухтаса черккесене чӑнк та чӑнк тутарчӗҫ. Ыттине ас тумастӑп, кӗсьере пин тенкӗрен ҫӗр тенкӗ тӑрса юлнине лайӑх ас тӑватӑп.

Урама тухрӑмӑр. Хӗлип мана ӑсатас тесе ӑшталанса ҫӳрет. Туххӑмрах такси тупрӗ.

– Харитон! Кӗсйӳнте таксиста пама ҫӗр тенкӗ укҫу пур. Асту, ан ҫухат! – тесе кӗртсе лартрӗ вӑл мана кабинӑна.

Таксисчӗ киле ҫитерсех хӑварчӗ, ҫӗр тенкӗрен ҫирӗммӗшне каялла пачӗ. Тӳрех хваттере кӗмерӗм. Арӑм манӑн питӗ хаяр. Эпӗ ӳсӗр килнине юратмасть. Ун пек чухне киле ҫӑкӑр туянса таврӑнатӑп. Вара арӑм мана ятламасть. Ачасене те: “Аҫуна ан тивӗр, ҫуртшӑн тӑрӑшакан ҫын-ҫке вӑл”, – тет.

Ку хутӗнче те юлашки ҫирӗм тенкӗпе ҫӑкӑр туянтӑм. Арӑм хутаҫа пушатнӑ вӑхӑтра хӳхӗм ҫӗлӗк туянма пуҫтарнӑ вӑрттӑн вырӑнти укҫаран пин тенкине уйӑрса илтӗм, Нинук (арӑма ҫапла чӗнеҫҫӗ) яшка антарнӑ самантпа усӑ курса ӑна аларан укҫа тыттарасшӑн пултӑм.

– Юрӗ, Хӑритун, укҫана каҫхине памаҫҫӗ, атту перекечӗ пулмасть. Ирхине илӗп, – мирлӗн сӑмах хушрӗ мӑшӑрӑм. Ҫапла вара аслати авӑтмасӑрах иртсе кайрӗ.

Ӗнер Хӗлипе тепре куртӑм. Вӑл мана асӑрхамарӗ. Тантӑшӑм каллех “хӑна” тӑвасран шикленсе васкаҫах ҫывӑхри тӑкӑрлӑка пӑрӑнса кӗтӗм.

СЮРПРИЗ

Ҫӗнӗ ҫул ҫитиччен пӗр эрне маларах уява пуҫӑннӑ Стасик Штиблетов раштав праҫникӗ иртсен тин урӑлса ҫитрӗ. Юхсан-юхсан каткари шыв та тулса тӑкӑнать теҫҫӗ те, эрне вӗҫӗнче Штиблетовӑн ӗҫмелли ҫеҫ мар, татӑк ҫӑкӑр та юлмарӗ. Мӑшӑрӗ, Наденька, воспитательте ӗҫлекенскер, ирех ача садне тухса каять, хӗрӗ, ултӑ ҫулти Света, унта амӑшӗпе ӑсанать. Стасик килӗнче Сюрприз ятлӑ кушак аҫипе юлать. Паян, вунӑ сехет тӗлнелле, тӑчӗ те кавир ҫинче тӗлӗрекен кушакне: “Ну, Сюрпризик, мӗн тӑвӑпӑр ӗнтӗ?“ – тесе ыйтрӗ. Лешӗ чӗнмерӗ, хуҫи ҫине кӑмӑлсӑррӑн пӑхса илсе алӑкран тепӗр пӳлӗме тухрӗ.

“Ҫитет ӗҫсе. Тасалас пулать. Тунти кун ӗҫе тухмалла”, – ӳкӗнӗҫлӗн шухӑшларӗ Стасик. Унӑн пӗр ырӑ йӑла пур. Мухмӑр

чĕртме вăл курткăн вăчăраллă кĕсйинче яланах вăтăр-хĕрĕх тенкĕ пытарса упрать. Çакă Штиблетова самаях хĕпĕртеттерчĕ. Акă хутаçа супăнь-мунчала, милĕк, таса кĕпе-йĕм чикрĕ те мунчана кайрĕ.

Шăмат кун мунчара халăх кăткă пек йăшăлтатаканччĕ. Паян никам та çук. Стасик кассир умĕнчи турилкке çине çирĕм пилĕк тенкĕ хучĕ. "Тата вăтăр тенкĕ кирлĕ", – терĕ кассир. "Мĕнле вăтăр тенкĕ? Эпĕ пĕчченех-çке! Мана пĕр билет çеç кирлĕ", – ӳкĕте кĕресшĕн пулмарĕ Штиблетов. "Вулăр стена çинче мĕн çырнине!"– хиврен çавăрттарса хучĕ хĕрарăм.

Стасик пуçне тепĕр еннелле пăрчĕ. Тĕлĕннипе çăварĕ карăлса кайрĕ, куçĕсем мăчлатма пуçларĕç. "Пĕрре мунча кĕме – аллă пиллĕк тенкĕ. Унчченхинчен икĕ хут ытла хаклăрах. Ну-и хĕсеç хура халăха!"

Пулмарĕ Стасикăн Çĕнĕ çул мухмăрне мунчара кăларасси. Вара: "Хупахра ирттерес", – тесе малалла таплаттарчĕ. Унта – 200-250 грамм кĕрекен шкалькăсемпе сутаççĕ. Хакĕ 18-20 тенкĕрен мала марччĕ-ха. Штиблетовăн каллех телей пулмарĕ. Шкалькăсен хакĕ 30-35-шер тенкĕ- мĕн. Тарăхса çитнĕскер, хăй пурăнакан çурт патне епле çитсе тăнине те сиссе юлаймарĕ, анчах хăйĕн подъездне мар, юнашаррине кĕрсе кайрĕ. Штиблетов – ырăсланнă чăваш, юнашар подъездра Кĕтерне ятлă чăваш хĕрарăмĕ пурăнать. "Тетя Катя", – тет ăна Стасик. Çулталăк каялла Штиблетов ăна ятарласа сăмакун аппарачĕ ăсталаса панăччĕ. Çавăнтанпа пĕрре мар кĕрсе тухнă вăл ун хваттерне. Вăл килĕнчех. Сăмакун хакне ӳстермен-мĕн. Пĕр кĕленчи унччен хи пекех – вăтăр тенкĕ. "Эпĕ патшалăх пек мар. Кĕркунне туянса хунă песук виçĕ михĕ. Пĕтиччен пĕр пус та хаклатмастăп", – пĕлтерчĕ Кĕтерне инке Штиблетова.

Тăварланă хăяр та, типсе кайнă çăкăр та тупăнчĕ. Хăй пĕр тумлам та сыпмарĕ. "Вăтăр тенке çитеймест-çке", – тесе ӳпкелешмерĕ Кĕтерне. Ун эрехĕ ах! хаяр та. Ĕçсен Стасик характерĕ хăвăрт пăсăлса каять. Юлашкине ӳпĕнтерсен Стасикăн пĕтĕм тĕнчене туласа тăкас туйăм çуралчĕ. Çапах та ăсне пĕтĕмпех сутса ĕçмен-ха. Кунта пĕтĕм тĕнчене тулама пуçлама кирлĕ маррине лайăх ăнланать. Çавăнпа инкĕшне тав туса хваттертен тухрĕ.

Хăйĕн подъездне кĕчĕ те курчĕ, пуштă ещĕкĕсене такам шап-шурă хутсем чиксе тухнă. Хваттершĕн укçа тӳлемелле иккен.

Штиблетовсем иртнӗ уйӑхра субсиди илме хутсем пуҫтарнӑччӗ. Малашне хваттершӗн яланхи пек пӗр пин те ҫӗр ҫитмӗл икӗ тенкӗ мар, ҫич ҫӗр тенкӗ ҫеҫ тӳлемелле пулать тесе хӗпӗртенӗччӗ.

Тӑваттӑмӗш хута хӑпарса ҫитрӗ те хӗрӗнкӗ Штиблетов куҫӗсемпе ҫав хут ҫине тӑрӑнчӗ. Пӗтӗмпе пӗр пин те виҫ ҫӗр вӑтӑр ҫичӗ тенкӗ тӳлемелле тесе палӑртнӑ цифрӑсен юлашки юпинче. Субсиди текеннине те панӑ-мӗн: тӑват ҫӗр тӑхӑр вунултӑ тенкӗ. Стасик куҫӗсем ытти цифрӑсем ҫине тӑрӑнчӗҫ: хваттере хутса ӑшӑтнӑшӑн хак икӗ хут ҫурӑ ӳснӗ, вӗри шыв – пӗр хут ҫурӑ, лифтшӑн та, пӑх-шӑка туртса илсе каякан шывшӑн та, ытти-хыттишӗн те унчченхинчен икӗ хут ытларах тӳлемелле. Хут ҫине сив турӑ ҫине пӑхнӑ пек пӑхаканскер, пусма карлӑкне такам тапа-тапа ҫӗмӗрсе пӑрахнине те асӑрхамарӗ. Площадка ҫинчен аялалла вирхӗнсе анчӗ...

Васкавлӑ пулӑшу машини ҫинче ҫеҫ тӑна кӗчӗ. Иккӗн ун ҫинелле ӳпӗннӗ. Пӗри кӑкӑрӗнчен пуса-пуса сывлаттарасшӑн, тепри укол тума юн тымарне шырать. "Вӑт сана Ҫӗнӗ ҫулхи сюрприз!" – ҫакӑн пек пулчӗҫ Штиблетовӑн тӑна кӗнӗ хыҫҫӑнхи малтанхи сӑмахӗсем...

ҪАПЛА ХУПЛАРӐМ АРӐМ ҪӐВАРНЕ

Эрех нумай ӗҫни сиенлине кам пӗлмест! Пурте пӗлеҫҫӗ. Сиенлӗ, калама ҫук сиенлӗ вӑл эрех. Ӗҫнӗ чухне кӑна лайӑх. Киле таврӑнсан арӑм вӑрҫать. Ирхине мухмӑр касать. Унсӑр пуҫне ҫав эрехе пулах кӗсье ҫӳхелсе юлать. Ҫав хаяр шӗвек инкекӗпех юратнӑ мӑшӑрпа нихҫан килӗштермелле мар вӑрҫса кайрӑмӑр. "Пӑянцӑ, алкоголик, проклятӑй ӗҫкӗҫ, пӗр эрнере виҫ ҫӗр тенкӗ укҫана кӳпсе ятӑн", – вӑрҫать мана ытарайми Вера-Верукӑм. Хам айӑплӑ пулнине ӑнланса ун пек чухне эпӗ шӑл шурри те кӑтартмастӑп, йӑлтах шарламасӑр чӑтса ирттеретӗп. Верукӑм вӑрҫать-вӑрҫать те диван ҫине лаш! кайса ӳкет, сылтӑм аллипе хӑйӗн чӗри анине йӑвалама пуҫлать. "Вӗлеретӗн эс мана, сан пиркиех чӗре чирне кайрӑм!" – тесе ахӑрса йӗрсе ярать.

Юлашки вӑхӑтра хӑй сӑмахне вӑл хӑех ӗненсе лартрӗ пулмалла, сасартӑках поликлиникӑна врачсем патне ҫӳреме пуҫларӗ. Иртнӗ эрне уншӑн уйрӑмах йывӑр пулчӗ. Тунти кун узи тутармалла-ха, ҫӗр ҫитмӗл тенкӗ укҫа илсе пыма хушрӗҫ тесе ирхине ултӑ сехетрех тухса кайрӗ. Ытлари кун диагностика центрӗнче пӗверне сканировани тумалла пулчӗ-мӗн. Ку ӗҫе

йӳнӗпех, ҫӗр ҫирӗм тенкӗпех тума пулать иккен-ха. Юн кун, каҫхине, ҫичӗ сехет ҫурӑра, лазернӑй томограф ҫинче тӗпченмелле пулчӗ, арӑм васкасах ик ҫӗр тӑхӑр вунӑ тенкӗ укҫа чиксе тухса кайрӗ. Те томографӗ Верукӑм ҫине пулчӗ, те хӑй томограф айӗнче выртрӗ – ун пирки нимӗн те калаймастӑп. Эп хам томографпа ҫыхланса курман, малашне те ҫыхланасси ан пултӑр. Ҫак мешехепех тата виҫӗ кун иртсе кайрӗ. Верукӑн тата виҫ ҫӗр тенкӗ расхутламалла пулчӗ. Вырсарни кун вӑл хырӑмӗ ҫине темле мӑнӑ аппарат ҫакса килчӗ. Хӑй каланӑ тӑрӑх, ку япала монитор ятлӑ-мӗн, чӗре еплерех ӗҫленине тӗрӗслет. Аппаратне ҫӗрле те хывмалла мар. Кашни икӗ сехетре хӑйне мӗнле туйнине дневник ҫине ҫырса пымалла. Арӑмпа иксӗмӗр ҫывӑракан пӳлӗмре ҫӗрӗпех будильник шӑнкӑртатрӗ. Ачасем те ҫӗр варринче вӑранавӑрана амӑшне пыра-пыра пӑхрӗҫ. Тунти кун, ҫичӗ сехетре, эпӗ ӗҫе тухса кайрӑм. Верукӑм, монитор айӗнче выртса ҫӗрӗпех асапланнӑскер, лӑпкӑн ҫывӑрса юлчӗ. Юрать-ха, вуннӑ ҫитеспе киле шӑнкравларӑм, атту кунӗпе те ҫывӑратчӗ пулӗ.

Ӗнер манӑн юратнӑ чӗкеҫӗм Верук тӗпчев хучӗсене йӑтса участокри терапевт патне кайрӗ. Киле вӑл ҫывӑрма выртас умӗн кӑна таврӑнчӗ. Хӑй хут пек шурса кайнӑ, тупӑка та унран хитререх вырттараҫҫӗ. Верукӑм чире кайнӑ тесе манӑн та чунӑм ура тупанне анса ларчӗ. Мар иккен! Томографсемпе узисем вӑл пӗрре те чирлӗ пулманнине кӑтартса панӑ. Арӑм ҫапах та кӑмӑлсӑр.

– Пӗр эрнере узисемпе томографсем айӗнче выртса икӗ пин тенкӗ укҫа шыв пек юхса тухса кайрӗ. Шуйттан пуҫӗсем! Укҫа сӑптӑрма пӗлеҫҫӗ, пӗр чир те тупса палӑртаймарӗҫ, – сурчӑк сирпӗтсех вӑрҫать Верукӑм.

Таҫтан тухрӗ хамӑн та хӑюлӑхӑм. Кайран хам мӗн каланинчен хам та хӑраса кайрӑм. Каласса Верукӑма ҫакӑн пек каларӑм:

– Верукӑм, – терӗм . – Эсӗ мана эрнере виҫ ҫӗр тенкӗ ӗҫсе янӑшӑн вӑрҫатӑн, – терӗм. – Пӑхӑсӑн хӑвӑн ҫине, эсӗ ахаль алкоголик мар, медицина алкоголикӗ. Ҫук чире шыраса икӗ пин тенкӗ пӗтертӗн, – терӗм.

Арӑм мана хирӗҫ пӗр сӑмах та чӗнмерӗ. Ҫапла хупларӑм арӑм ҫӑварне ӗмӗрӗмре пӗрре те пулин. Хупласса хупларӑм та, хамӑн ҫӑварӑм типпе юлатех пулӗ-ха ӗнтӗ. Верук кивҫене кӗрсе кайнӑ-мӗн. "Ҫитес уйӑхра кивҫенсене парса татас пулать, халӗ пирӗн кашни пус шутра, пырна йӗпетес пирки ан та шухӑшла", – сассине хӑпартса, куҫран чӑр пӑхса065 каларӗ мана Верукӑм. Тепӗр тесен лайӑх та пулӗ-ха ку. Тен, вуҫех ӗҫме пӑрахӑп.

ЧĔНМИ ШĂРЧĂК

Эпĕ ĕçлекен кантур Шупашкарти Союзсен çуртĕнче вырнаçнă. Çиччĕмĕш çул ĕнтĕ кунта хаçат кăларса тăрас енĕпе тăрмашатăп. Редакцие çырусем килеççĕ, хамăр та хуравлатпăр. Тĕп хулари Гагарин урамĕнче пурăнакан пĕр ватă чăваш патне (Союзсен çуртĕнчен икĕ çухрăмран ытла мар инçете) çыру яма тиврĕ.

Тăвата листа хута конверта чиксе çыпăçтартăм. Ирхине, тăхăр сехетре, хамăр ĕçлекен çуртри почта ещĕкне кайса ятăм. Пĕр кун иртрĕ, икĕ кун... Хайхи манран çыру кĕтекен çын телефонпа шăнкăравлать: "Çырăвна илеймерĕм, ямарăн, суйрăн пуль эс", – тет. "Эп те çамрăк мар, эс те сакăр вуннă тултартăн, суяс вăхăт иртсе кайрĕ пулĕ ĕнтĕ пирĕн", – лăплантартăм старике.

Çакăн хыççăн тата тепĕр икĕ кун иртрĕ, эрне каялла кăларса янă çырăвăма манăн сĕтел çине каялла пырса хучĕç. Конверт хуплашкин пĕр енне пысăк сас паллисемпе "доплатить" тесе çырса хунă. Кăмăл хуçăлчĕ. Хамăр çуртрах вырнаçнă 13-мĕш почта уйрăмне антăм. Кунта ĕçлекен чипер кăна чăваш хĕрарăмĕ манăн çырăва аптекăсенче усă куракан тараса çине хучĕ. Пĕр хутчен шайлаштарни ăна çырлахтармарĕ-тĕр, тата тепре виçсе пăхрĕ. "Йывăрăшĕ çирĕм пилĕк грамран ытла пулмалла мар. Çырăву çирĕм çичĕ грамм çурă тайрĕ. Хушса пĕр тенкĕ те 30 пус тӳлемелле", – çакăн пек пĕтĕмлетӳ турĕ пуçлăх. Юн пусăмĕ ытла хăвăрт хăпарса кайнине сиссе, чĕрем пĕр вĕçĕмсĕр тăпăртатнине туйса нимĕн те шарламарăм. Вак укçа кăларса патăм та çырăва почтăра хăварса, тăваттăмĕш хута хăпартăм.

Темиçе кунран Гагарин урамĕнчи çуртра пурăнакан пĕлĕшĕм татах шăнкăравларĕ. "Çырăвна илтĕм, савăнтăм", – тет. Манăн савăнас килмерĕ.

"Эх, почта, почта... Раççей почти! Унччен хи чапу пĕтсех пырать-çке санăн. Тупăшна ӳстерес тесе кĕлттĕм-келттĕм çырусене те тарасапа виçсе аппаланатăн, тĕрлĕ вак тавар туянма сĕнетĕн, сыснасемпе чăх-чĕп апачĕ çине ямалли им-çам сутса чăрманатăн. Пенси салатас ĕçе те патшалăх сана шанса парасшăн мар. Пĕтес, вилес вăхăту çитсе пымасть-ши санăн?" – салхуллă шухăшсем пăраларĕç шуралма пуçланă пуçăма.

Кăнтăрла иртсен пире шалу пачĕç. Тӳлемеллисем нумай, кăштах перекет кĕнеки çине те хурса пыма тивет. Ватăлатпăр-çке, ыран мĕнле пурăнасси шухăшлаттарать.

Укҫа-пухча саланса кайиччен тӳлемеллисене тӳлес, перекетлемеллине перекете хывас терменпе ӗҫрен кăштах маларах тухса утрăм.

"Мода ҫурчӗ" чарăнура ҫиччӗмӗш троллейбуса ларма май килчӗ. Алăксем хупăннă-хупăнманах кондуктор ятлаҫни-йăслани хăлхана пырса кӗчӗ. Ах, ҫав янахсăр хӗрарăм хуҫаланать-ҫке паян кунта! Хăй вăл чăвашах-ха, анчах вырăсла ятлаҫма ҫав тери маҫтăр. Мӗнле кăна хивре сăмах тухмасть пуль ҫăварӗнчен! Вăрҫать-ятлаҫать кăна мар, виртлешет, ҫынсенчен мăшкăлласа кулать: намăслантарать, нимӗн тăваймасăр хăйӗнпе хăй калаҫма пуҫлать. Пӗчӗкҫӗ те хытанка вăл, куҫӗ вара хаярлăхпа ҫиҫет, ҫăварӗнче чӗлхи пӗр вӗҫӗмсӗр ҫаврăнать те ҫаврăнать.

Салонра ҫынсем шăп-шăпăртăк ларса пыраҫҫӗ. Пӗри-тепри кондукторпа калаҫнин мӗн усси тесе те шухăшлать пуль.

Виҫӗ чарăну хыҫҫăн чăтаймарăм, хӗрарăма кăштах шăпланма ыйтрăм. Ҫак таранччен вăл троллейбусри пассажирсене пурне те вăрҫатчӗ, хăйӗнпе калаҫакан ҫын пуррине асăрхасанах "хӗҫ-пăшалне" ман ҫинелле "тӗллерӗ". Эпӗ нӗрсӗр, хырăмламас, măн кăмăллă, сăпайлăх чиккинчен тухнă этем-мӗн. Тата тем-тем, тата темӗн те пӗр... "Ӳсӗр, куҫна та уҫаймастăн", – тенӗ хыҫҫăн чăтаймарăм пулмалла, тата тепӗр икӗ сăмах каларăм. Пассажирсенчен хăшӗ-пӗри манăн хута кӗрессе кӗтнӗччӗ. Кăлăхах! Халиччен ҫăварне шыв сыпнă пек ларса пыракан хӗрарăмсенчен пӗри мана кондуктор ӗҫӗ йывăрри, манăн, портфельпе-папкăпа ҫӳрекенскерӗн, ӗҫӗм ҫăмăлли ҫинчен ăнлантарма пуҫларӗ, тепри – кондуктор хӗрарăм, эпӗ арҫын пулни пирки асăрхаттарчӗ. Пӗтрӗ пуҫ! Хыткан тухатмăш ҫакăн хыҫҫăн ман паталла сурчăк сирпӗтсе, чăмăрӗсене пӗр-пӗрин ҫине ҫапса тапăнса пыма пуҫларӗ. Алăк уҫăлчӗ те, эпӗ, ҫитес ҫӗре ҫитмесӗрех, троллейбусран пăкă пек тухса сирпӗнтӗм.

Элле, мӗншӗн сăмах хушрăм-ши ҫав усала? Кам туртрӗ-ши мана чӗлхерен ака уйăхӗн 25-мӗшӗнче каҫхине ултă сехетре ҫав тамăк эсреметне асăрхаттарса ик-виҫ сăмах калама?!

Ансан та анраса кайнă ҫын евӗр юпа пек хытса тăтăм. Эп ларса килнӗ 580-мӗш троллейбус малалла вашкăртса куҫран ҫухалчӗ.

Тăн пырса кӗнӗ пек пулчӗ те, перекет банкӗн Университет урамӗнчи 19-мӗш офисне ҫитсе килес шухăшпа ҫуранах утрăм. Банкӗнче ҫын нумай. Пилӗк чӳречерен иккӗшӗ кăна ӗҫлет. Ку та

пулсан юрĕччĕ, икĕ кассăран пĕрне анчах уçнă. Контролерсем, чылаях опытлăскерсем пулмалла, пĕччен тăрмашакан кассир валли темĕн чухлĕ ĕç туса парса ĕлкĕрсе пыраççĕ. Касса чӳречинчен пуçласа урама тухмалли алăк патне çитиччен вун-вун çын черете тăрса капланчĕ. Тепĕр сехетрен-сехет çурăран банк хупăнать: çынсем канăççăрланаççĕ, кăмăлсăрланса калаçаççĕ. Кунта укçа хывакансем, илекенсем çеç мар, тĕрлĕрен тӳлевпе килнисем те пур-çке-ха. Кассир кашни клиента питĕ вăрах, пилĕк-ултă минутченех тытса тăрать. Офисăн контролерсем ĕçлекен залĕнче, банк пуçлăхĕ пулмалла, телефонпа хыттăнах калаçать: “Иванов, Петров, Сидоров”, – тесе такама пĕçерккĕ парать. Уçасчĕ унăн тепĕр кассăна, ларса ĕçлесчĕ, черет кĕскелнĕ пулĕччĕ. Ун пек тума унăн “ăс” çитмест. Ăсĕ пур-тăр та, çынсене хисеплесси çук, кахаллăх пысăк. Перекет банкĕн Чăваш республикинчи уйрăмĕн управляющийĕ Вячеслав Александров пирки начар калаçнине илтмен. Юлашки вăхăтра банкăн симĕс вывескăллă офисĕсем хулара чылай уçăлчĕç, анчах та вĕсенче йĕрке сахал. Чӳрече нумаййи, вĕсем хупă тăраççĕ пулсан, ниме те пĕлтермест-ха.

Пĕр сехет патнелле тăнă хыççăн аранах укçа хывма май килчĕ. Черетри çынсем сĕр-сĕр калаçса, мăкăртатса тăрса юлчĕç.

Тухнă-тухнах, хваттер укçине те тӳлесе пăрахас терĕм. Тӳлеве çав урамри “Акатуй” супермаркетăн иккĕмĕш хутĕнче йышăнаççĕ. Кĕтĕм, черет йышăнтăм. “Черет йышăнма хушман”, – пĕлтерчĕ манăн умра тăракан хĕрарăм. “Ара, касса тата хĕрĕх виçĕ минутран çеç хупăнать-çке”, – персе ятăм хăюллансах. “Пĕлместĕп! Мана çапла каланă, эпĕ сире пĕлтертĕм”, – хуравларĕ малта тăраканни.

Ку хутĕнче черет хăвăрт шуса пычĕ. Акă, манăн умри хĕрарăм (кассирăн çывăх пĕлĕшĕ пулмалла, палла-тăрансем пирки самаях сăмахларĕç) укçа тӳлерĕ. Калаçăвĕ вĕçленеймерĕ пулмалла та, кассир чӳречене шакăрт хупса лартса хĕрарăма алăк патне йыхăрса илчĕ. Вăхăт чылаях иртрĕ, вĕсен калаçăвĕ вĕçленчĕ. Касса хупăнасси тата вун пилĕк минут. Кассир чӳречене урăх уçмарĕ. “Эпĕ сире черете тăма хушман. Ĕç вĕçлениччен манăн укçа шутламалла, тепĕр вунă минутран инкассаторсем килеççĕ”, – хирĕнсе тухрĕç унăн çăварĕнчен çавра сăмахсем.

Урама тухрăм. Пуç кăшăлланнă пек йывăр. Ăш-чик йӳççе тăрать. Путекĕнни пек йăваш чунăм çине паян тăвата хутчен

лачлаттарса сурчĕç. Кăмăл хуçăлнине çавăрса ярас тесе çак урамри "Ак бар" хупаха кĕтĕм. Сĕтелсене йышăнса пĕтернĕ: çамрăксем те, ватă енне сулăннисем те пур. Бармен çывăхĕнче тăвату-пилĕк çамрăк хĕвĕшет. Кантăк çывăхĕнче юман каска пак платна арçын куç айĕн хĕвĕшӳ çине пăхса сăра ĕçет. Хупах хуçи çĕр аллă грамм федеральнăй тултарса пачĕ, турилкке çине вĕт кукăльсем хучĕ. Юнашарти сĕтел хушшинче икĕ çамрăк лараççĕ, пĕр кĕленче çавăрĕнченех черетпе сăра ĕçеççĕ. Ирĕк ыйтрăм та, мана та ларма сĕнчĕç. Кăмăллă йĕкĕтсем, çӳçĕсене кĕске кастарнă, лайăх тăхăннă.

Стаканран эрехе виçĕ ăстрăмпа ĕçнĕ, кукăль çырткаланă хыççăн ăш-чик уçăлнă пек пулчĕ. Йĕкĕтсем (пĕри – Петя, тепри – Леша) çарта та пулнă-мĕн. Çыру çӳçли флот пирки сăмахлать, сарри хăйне десантник терĕ. Манран та ятăм-шывăма ыйтса пĕлчĕç. Кулкалаççĕ, ăшшăн калаçаççĕ. "Алексеич, отец", – тесе савăнтарчĕç мана. Лайăх, кăмăллă каччăсем. Тĕнче хĕсĕр мар иккен. Пĕтмен-ха çĕр çинче лайăх çынсем. "Агрегат заводĕнче ĕçлетпĕр, слесарьсем", – паллаштарчĕç хăйсемпе. Аллисем слесарĕнни пек курăнмарĕç те, эпĕ çавах ĕнентĕм. "Паян питĕ ывăнтăмăр, укçа параймарĕç-ха. Çĕнтерӳ кунĕ çывхарать. Отец, эсĕ те, эпир те çарта пулнă. Çĕр грамм туянса хăналаймăн-и пире?" – тет Леша, хăй вăтаннă, аванмарланнă пек пулса пуçне аялалла пĕкет. Ачасен кăмăлне хăварас мар терĕм, шаклаттарса çĕр грамм ĕçрĕмĕр. Пуçа кайрĕ, эпĕ урăх сыпас мар терĕм. Каччăсене, вĕсем ыйтнипе, тата çĕршер грамм ярса партартăм. Вĕсен калаçăвĕнчен эпир пĕр çуртрах пурăнни палăрчĕ. Киле кайма та пĕрлех тухрăмăр. Ашшĕ е пиччĕшĕ çумĕнче пынă пек пыраççĕ йĕкĕтсем ман çумра.

Тӳлек, çăварĕсенчен пĕр усал сăмах та тухмасть.

Çурт патне çитсе арккăран тухас умĕн кĕтмен çĕртенех Петя кăкăрăмран кап! ярса илсе чарса тăратрĕ. Леша, çакна кĕтнĕ тейĕн, шалти кĕсьери укçана пĕтĕмпех сăптăрса кăларчĕ. Куç хупса иличчен иккĕшĕ те таçта кайса çухалчĕç. Самант иртрĕ-и е иртмерĕ-и те – кăшкăрса ярас тесе эпĕ каялла çаврăнтăм. Манăн хыçра тăватă-пилĕк утăмра, виççĕн тăраççĕ. Иккĕшĕ паçăр хупахра стойка умĕнче çапăнса-çаврăнса тăракан çамрăксен ушкăнĕнчен. Виççĕмĕшĕ, юман каска пек тĕреклĕскер, чӳрече патĕнче сăра ĕçсе тăраканни. Шăпах вăл виçĕ утăм турĕ те çăвар шăрши кĕмеллех ман пата çывхарчĕ, аллинчи пуклак та тĕссĕр япаларан

çĕçĕ шалтлатса тăсăлса тухрĕ. “Мужик, сволочь, сассуна кăлар çеç, халех чĕнми шăрчăк туса хуратăп”, – сăрхăнтарса кăларчĕ шăл витĕр сăмахĕсене. “Мобильник çук-и, кĕсйӳсенче тата мĕн пур?” – вăрă ĕçне хăнăхнă аллисемпе кӳлепене сăтăрса тухрĕ кашкăр евĕрлĕ çын.

Унтан, манăн ура пуçне чат! сурса пăрахса, каялла çаврăнчĕ. Виççĕшĕ те троллейбус чарăнакан вырăна васкамасăр утрĕç.

Çын çӳреме пăрахнă арккă айĕнче эпĕ пĕчченех тăрса юлтăм. “Милицие пĕлтерес мар-ши?” – шухăш вĕçрĕ пуçра. Юман кĕрешĕ евĕрлĕ “кашкăр” унччен милицире ĕçленĕ çын пулмарĕ-и-ха çав? Ытла та палланă сăнлă курăнчĕ. Тен, ирхине прокурора çăхав çырса парас. Çав вăхăтрах Шупашкарти прокурорсенчен пĕрин гаражне уçса çăмăл машинине вăрласа тухни аса килсе кайрĕ. Тӳре-шарапа муталанас шухăш туххăмрах сирĕлчĕ.

Чĕнми шăрчăк тăватăп терĕ-и-ха çав эсрел. Турĕ те ав. Çапах та чĕнми шăрчăк та шăрчăках-çке.

СЫСНАПА ЙЫСНА

Гладков урамĕнчи шыçă чирĕнчен сыватакан пульницăра çывăх хурăнташăм выртать. Ун валли аптекăран эмел туянмалла пулчĕ. Ăна ирхине ĕçе кайнă чухне çула май кĕртсе парас терĕм. Ку урампа улттăмĕшпе вун пĕрмĕш автобуссем яланах тулли çӳреççĕ, çавăнпа çуранах утмалла пулчĕ. Пыратăп урампа. Кунта тротуарсем сарлаках мар та, хирĕç килекенсем çумранах иртсе каяççĕ. Мана хăваласа çитсе хыçа хăваракансем те пур. Ытларах – ар çынсем. Ĕçе васкаççĕ пулмалла. Мана вăл-ку мар, çакă тĕлĕнтерчĕ: пурте аллисене чылаях сулмаклă çатăркка хутаç тытнă. Ку урамра арçынсем ĕçлекен предприяти нумай: автобаза, йăла комбиначĕ, электросеть, тата ытти те.

Пĕр çамрăк çын чĕлĕм чĕртме манран шăрпăк ыйтрĕ. Хам туртмастăп пулсан та кĕсъере манăн яланах шăрпăк пур. Сигаретне тивертнĕ хыççăн васкамасăр пĕрле утрăмăр. “Мĕншĕн ку урампа ар çынсем хутаç йăтса çӳреççĕ?” – ыйтрăм эпĕ унран. “Папаша, пĕлместĕн-им, çакăнти предприятисемпе организацисенче ĕçлекенсем укçа сахал илеççĕ. Унччен кунта столовăйсем нумайччĕ. Çын çӳременнипе халĕ вĕсем хупăнчĕç. Хăшĕнчен пĕринчен кафе е казино туса хучĕç. Ĕç çынни ун пек

çĕре çӳреймест. Халĕ рабочисемпе служащисем кăнтăрлахи апата килтен хутаçпа илсе килеççĕ", – ăнлантарчĕ мана çак çамрăк.

Çаплах пулĕ çав. Тĕрĕсех калать пулмалла ку йĕкĕт. Шупашкарта та, ытти хуласемпе райцентрсенче те столовăйсене хупса кафесемпе казиносем уçрĕç. Эрех шыв пек юхать, апачĕ хаклă. Какай ылтăн вырăнĕнче шутланать, сĕт юр-варĕ те йӳнĕ мар. Мĕнле хаклă ан пултăр-ха ĕнтĕ вăл? Кăçалхи хĕллехи уйăхсенче çеç республикăмăрта ĕне-выльăх йышĕ 13 процент, сыснасен шучĕ 20 процент чакнă. Япала мĕн чухлĕ сахалрах, çавăн чухлĕ хаклăрах-çке -ха вăл.

Столовăйсем пур çĕрте те хупăнса пĕтмен-ха вĕсем. Ĕçлекеннисем те пур. Вĕсенче те апат хаклă. Кăнтăрла çур порци аш яшки, котлет е гуляш, пĕр курка чей, ик-виç татăк çăкăр илес пулсан та 35-40 тенкĕ кăларса хума тивет. Рабочи-служащин уйăхра 20-22 кун эçе çӳремелле, ĕç укçи чылайăшĕн 3-4 пин тенкĕрен ытла мар. Кăнтăрлахи апат валли çеç уйăхра пĕр пин тенке яхăн укçа кирлĕ. Ытти "шăтăксене" мĕнле питĕрмелле? Çав "шăтăксене" питĕрме укçа перекетлес тесе ĕç çынни пиçиххи çине çĕнĕ шăтăк шăтарать те ăна туртса çыхса лартать, вĕри апатсăр пурăнать, чирлет, вăхăтсăр хĕне каять.

Хамăн та темиçе çул ĕнтĕ сахăр чирĕ иртсе кайма пĕлмест: çăвар типсе тăрать, юн пусăмĕ пысăк, урасем ыратаççĕ, куç вăйĕ пĕтет, чĕре сăлтавсăрах тĕпĕртетсе ĕçлеме тытăнать. Эмел те ĕçмен мар, диета текеннине те тухтăр хушнă пек тытса пыма тăрăшнă. Усси пур-тăр-ха, анчах сахалтарах пек туйăнать. Сахăр чирĕпе аптăракансене тухтăр тӳлевсĕр эмел илме рецепт çырса парать. Уйăх-уйăх çурă каялла çавăн пек рецепта эпĕ те çыртарса илнĕччĕ. Эрнене яхăн шырарăм çак эмеле – тупаймарăм. Пĕр пысăк аптекăра мана врач панă рецептри эмеле улăштараканнине илсе кайма сĕнчĕç. Курупки çине Брынцалов фирми кăларнă тесе çырнă. Пĕлетĕп ку этеме. Патшалăх Думин депутачĕ чухне сăмах çапма пуçласан ăна никам та чараймастчĕ. Нумай калаçакан çынсене шанма йывăр. Атя, депутатĕнче лартăр пулатчĕ-ха ĕнтĕ, унта вăл çынсене нумай сиен тăвас çук, анчах та Раççейри эмел кăларакан фабрикăсем те унăн аллинче-çке-ха. Кунта вара çак çыннăн сиенĕ пысăк пулма пултарать. Сиенне эпĕ те тӳснĕччĕ-ха. Унăн фирми сысна хырăмлăхĕн парĕнчен хатĕрленĕ инсулинпа хама укол туса тăтăм. Диетăна пула çурма выçă пурăнатăп пулсан та икĕ эрне хушшинче пилĕк кило ӳт хушрăм. Туйрăм, ку инсулинпа

укол туса тăни ырра мар. Эх, пурнăç. Хăш чухне сыснана та йысна вырăнне хума тивет-çке, терĕм те Брынцалов инсулинне çўп-çап карçинккине пăрахрăм. Акă, халĕ уйăха яхăн унăн фирми кăларнă эмеле ĕçме лекрĕ. Каллех усси пулмарĕ-тĕр. Чир шала кайни куçкĕретех. Юн тĕпчевĕ мĕн кăтартĕ-ши ĕнтĕ тата?

Çак йўтĕмпе кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче "Çурçĕр" клиникăри эндокринолог патне кĕтĕм. Çамрăк хĕрарăм врач манăн анализсене пăхрĕ те: "Мĕншĕн эсир эмел ĕçме пăрахнă? Сирĕн юнăрти сахăр кирлинчен тăватă хут пысăкрах", – терĕ. "Ĕçетĕп-çке. Акă, эмелне те хампа пĕрлех илсе килтĕм", – тўрре тухма хăтлантăм эпĕ. "Сире кам ку эмеле илме рецепт çырса панă? Ăçтан лекнĕ ку эмел сирĕн алла?" – тата та ытларах сассине хăпартрĕ тухтăр. "Ара, аптекарьсем рецептра çырнине улăштарать, имĕ-юмĕ пĕр пекех терĕç-те-ха", – "парăнас" килмест манăн та. "Мĕнле çынсем эсир, совет саманинче ўссе çитĕннĕскерсем! Шанатăр, ĕненетĕр. Халĕ никама та шанмалла мар, ĕненмелле мар. Авă, тыттарса янă сире Брынцаловăн тăм тўмисене. Аптекарьсемшĕн тавара вырнаçтарса пултăр!" – пăсăрлантарать мана хамăн ывăл çулĕнчи çамрăк тухтăр.

Акă вăл васкасах çĕнĕ рецепт çырса тыттарчĕ. "Шырăр, пур ку эмел аптекăсенче. Эп çырса панине урăх эмел нимĕнли те улăштараймасть, Брынцалов имçамне кăларса перĕр", – кăмăлне çемçетрĕ вăл юлашкинчен. Манăн хыççăн черет йышăннă çынсен вăхăтне тăсас мар тесе эпĕ тухтăра тав турăм та кабинетран тухрăм.

Çуркуннехи кун вăрăм. Кантур сĕтелĕ хушшинчен тухсан та тепĕр ăстрăм ĕçлеме май пур. Президент йывăç лартма хушать. Хула çывăхĕнчи пахчара ман груша йывăçĕ çук. Унăн хунавĕсене колхоз пасарĕнче сĕнеççĕ. Каç пулса килнине пăхмасăрах унта васкарăм. Пасар шавĕ лăпланман-ха. Йывăç хунавĕ сутакан та пур. Хуçи Чулхула вырăсĕ-мĕн. Çамрăк хунавсем хушшинче çўресе "Северная услада" груша йывăççине туянас шухăш çуралчĕ. Укçа тўлес тесе енчĕке кăларнăччĕ кăна, сутăç çумне хура тумлă пĕр йĕкĕт хура шăна пек пырса сырăнчĕ. Хура шăна этеме перĕнет те вĕçсе каять. Ку вара пăрăнасшăн мар. Сутăçăран хутсем ыйтать. Хăй те папкинчен пĕр тĕрке хут туртса кăларчĕ. "Кунта черет çук. Мана çак çамрăк хунава парса ятăр-ха. Вара иксĕр татăлма та пултаратăр", – шиклене-шикленех сăмах хушрăм эпĕ. Налук инспекторĕ (налук инспекторех е пасарта вырăн укçи

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ
И-39939

пуçтаракан пулчĕ-ши вăл?) ман çине кăн! пăхрĕ те: "Кĕтетĕн, старик! Санăн вăхăт нумай, манăн сахал. Эсир кунта нумайăн, эпĕ – пĕччен. Тĕрĕслемеллисем мăй таран", – терĕ.

Урăх хушша-хуппа кĕмерĕм. Налук пухакансем – хивре этемсем. Вĕсен шăлĕ хушшине пӳрнене чикес çук, шатăрт çыртса татаççĕ. Библире те налук, хырçă пуçтаракансем пирки (унта вĕсене мытарьсем тенĕ) пĕр ырă сăмах калани те çук. Сĕмсĕрлĕхпе куштанлăх вĕсенчен хăйсенчен анчах килмест. Вĕсене влаç, çĕнĕрен чĕрĕлсе тăнă капитализмла строй çакăн пек хаяр, çынсем тĕлĕшĕнчен хĕрхенӳсĕр пулма хистет. Хырçă, налук хырса илесси çĕршыв экономикипе политикинчи чи кирлĕ проблема пулса тăчĕ. Ара, урăхла пулма та пултараймасть-ха ĕнтĕ. Раççейĕн финанс системи хырçă мĕн чухлĕ пуçтарни тата нефтьпе газа, вăрмана мĕн хака сутни çинче тытăнса тăрать-çке.

Сутăç çывăхĕнче тĕрмешсе тăракан налукçăн сăмахĕсене хăлхам ан илттĕр тесе пăрăнса утрăм. Груша йывăççи лартса пулмарĕ кăçал. Çитес çул е кĕркунне пирки ĕмĕтленесси çеç юлать ĕнтĕ.

Тухнă-тухнах, пахчана çитсе килем тесе "Çĕнĕ сала" чарăнура троллейбусран анса юлтăм. Пахчам манăн Етĕрне çулĕ çинче. Хыркассине çитиччен пĕр çухрăмра. Унта 122-мĕш автобус çӳрет. Автобус яланах лăк тулли, килька пулă пек чыхăнатпăр. Транспорт кивĕ, Адам чухнехиех. Тĕсне кура пассажирсем ку автобуссене "хĕрлĕ дракон", "кăвак дракон" теççĕ. Кăларнăранпа темиçе хутчен "çĕнетнĕрен" сăрри тĕллĕн-тĕллĕн хуйăр хуппи пек хăпăна-хăпăна ӳкнĕ. Ют çĕршывсенчен илсе килнĕ хӳхĕм автомобильсем хушшинче ку транспорт тухатмăш карчăк пек курăнать.

"Хĕрлĕ дракон" çула тухасси тата тепĕр сехете яхăн-мĕн. Унччен тĕттĕмленме те пуçлĕ, каялла таврăнма хĕн пулать. Çавăнпа 106-мĕш маршрутпа çӳрекен автобус çине билет илтĕм. Пĕрремĕш чарăну Хыркассинче пулать, каялла пĕр çухрăм утасси нимех те мар.

Пилĕк минутранах хускалса кайрăмăр. Манпа пĕрле автобуса 70 çулсенчен иртнĕ карчăк ларчĕ. Больницăра выртнă-мĕн те, халĕ килне, Çĕктере, таврăнать. Çăмăллăх йĕркипе билетне укçасăрах Хыркассине çитиччен илнĕ. «Çĕктерте антарса хăвар-ха, ывăлăм», – ыйтрĕ вăл водительтен. "Çĕктерте манăн чарăну çук, Хыркассинче чарăнатăп", – татса хучĕ шофер.

4-39339

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА

Çĕктерте чарăнмарĕ. Карчăкăн Хыркассинчен каялла Çĕктере çитме 122-мĕш автобусах кĕтме тивет.

Кунта водителе ятлама та май çук. Автобуссене çӳретекен Хуçа ăна Çĕктерте чарăну туса паман. Чарăну туса парсан хура халăха лайăх пулать-çке-ха. Водительсем Хуçана итлемесĕр чарăнма юраман вырăнсенче чарăнусем тусан хăйсенех йывăр тивет: бензин ытлашши расхутланать, штраф пама та пултараççĕ. Çапла вара, ирĕксĕрех чухăн водителĕн чухăн карчăка хĕсĕрлемелле пулса тухать.

Пуянсемпе чиновниксем хушнипе кунсеренех чухăн чухăна хĕсĕрленине курса тарăхатăн та ирĕксĕрех вырăссен аслă сăвăçĕ Николай Некрасов çырнă йĕркесем чĕлхе вĕçне килеççĕ:

“Ирĕклĕх çук, чуна тăвăр,
Çĕр те иртмест, чунилли.
Тухтăрччĕ, уртăрччĕ тăвăл!
Хуйхă ăш-чикĕм тулли”.

Автобусран антăм та пахча еннелле утатăп. Йывăçсем чечек çурма хатĕрленеççĕ. Сывлăш уçă. Хĕвелтухăç енчен хура пĕлĕтсем капланса килеççĕ. Аслатиллĕ, тăвăллă çумăр пулма пултарать.

Хăвăртрах утма пуçларăм. Акă, манăн пахча: улт-çичĕ çимĕç йывăççи, тĕмсем, сухан-кишĕр лартмалли-акмалли вырăн. Хăрах енче щитсенчен пуçтарса тунă пĕчĕк пӳрт. Пӳрчĕ пĕчĕк те чӳречисем чылаях пысăк. Сĕтĕрĕнчĕксемпе çĕрле выртма вырăн шыракансем ку чӳречесене тăтăшах çĕмĕрсе тăчĕç. Çакна курах алăка питĕрме пăрахрăмăр. Ятарласа фанер çине “кантăка ан ватăр, алăкран кĕрсе çӳрĕр, питĕрмен” тесе çырса икĕ тĕле çакса хутăм. Халĕ кантăка çĕмĕрмеççĕ, алăкран кĕрсе çӳреççĕ. Шалта нимĕн те тытмастпăр: икĕ пукан та пĕр кивĕ диван. Çитар-минтер те çук. Кил-çуртсăр çын кĕрет-ши, е ясарлăхне ирттерсе ярас тесе арçын-хĕрарăм çывăрса каять-ши? Вăл та, ку та пулĕ. Ав, иртнинче кĕçĕн ывăлăм урай çунă чухне диван айĕнчен хĕрарăм йĕмне тупса кăларчĕ. Ăпăр-тапăрсемпе пĕрле çунтарса ятăмăр. Хытă вырăн çинче минтерсĕр, утиялсăр çывăрасшăн мар-мĕн пирĕн “хăнасем”. Пĕлтĕр çулла арăм хăй пĕччен килсе пахчари пӳртре икĕ минтер, пĕр утиял, вырăн çитти тупнă. Япалисем пирĕн мар. Кӳршĕсене кăтартрăмăр, йышăнмарĕç. Вара çав хатĕр-хĕтĕре чĕркесе çыхса мачча çине петĕмĕр. Кӳршĕсем тенĕрен, вĕсем пирĕн улшăнсах тăчĕç-ха. Пĕри сутать, тепри туянать. Пĕр-ик çул

иртет те, туянниех каялла сутса ярать. Пахчан усси сахал, пĕр вĕçĕмсĕр çĕмĕрсе кĕреççĕ. Пасарта кишĕр-купăста, улма-çырла йӳнĕ. Юрать-ха, хула çывăхĕнче те, дачăсене туянакан тупăнать. Инçетри пахчасене хуçисем пăрахнă, çурчĕ-йĕрĕсене ватсасалатса пĕтернĕ теççĕ. Чăнахах та пуль!

Сулахай енчи кӳршĕ пĕр вĕçĕмсĕр улшăнса тăчĕ. Иртнĕ çул кунта ялан хĕрĕнкĕ çӳрекен хĕрĕх-хĕрĕх пилĕк çулти вăйпитти арçын килсе вырнаçрĕ. Малтанхи кунсенчен пуçласах пăтă пиçмерĕ манăн унпа. Пӳртне-пахчине "çума" чĕннĕччĕ те, чир вĕрĕлнĕ пирки каяймарăм. Чылайччен шăмарса çӳрерĕ çакскер, мана сивлесе сăмахларĕ.

Çитрĕм, калиткене уçрăм, пӳрте кĕретĕп. Шалти пӳлĕмре такам мĕкĕлтетет. "Тинех пирĕн пата килсе çӳрекен "хăнапа" паллашма тӳр килчĕ-мĕн-ха", – шухăш вĕçсе иртрĕ пуçра. Тен, пĕччен кăна та мар, Хыркасси каччи Лапсар пикине çĕр каçма илсе кĕмен-ши-ха?

Пӳлĕм алăкĕнчен пысăк çыхă йатнă арçын тухрĕ. Айтуру, хамăн кӳршĕ-çке ку. Хăй яланхи пекех хĕрĕнкĕ, тен, ӳсĕр те пулĕ.

– Подлец, вăрă ĕçĕпе пурăнатăн! Пӳрте çĕмĕрсе кĕрсе вырăн япалисене веçех хăвăн патне сĕтĕрсе килнĕ. Ыранах милици чĕнсе килетĕп. Эс йĕркесĕр этем пулнине пĕлтĕр дачăна "çума" пыман хыççăнах пĕлтĕм. Çара пыйтă, выртса-тăма тӳшеккӳ-минтерӳ те çук. Çыннăнне хапсăнатăн, – сăрхăнса тухрĕç хĕремесленсе кайнă сыснаЛла арçын çăварĕнчен сăмахсем.

– Шутла-ха хăвах, мĕн тума кирлĕ санăн япалусем мана. Мĕн тума çĕмĕрсе кĕреп эп сан пӳртне? – сасса хăпартсах калаçма пуçларăм эпĕ те.

– Эс ман карта урлă тепре каçас пулсан, санран нимĕр тăватăп, – вирлĕн шăхăртса ячĕ мана урса кайнă арçын.

Хăлха хупланса ларчĕ, куçсенчен çиçĕм çиçсе тухрĕ. Арçын хул айĕнчи тĕркине йатса тухса кайнине те сисеймерĕм, хыçалти пӳлĕмри пĕччен ларакан пукан çине сĕвĕнтĕм.

Тулта тăвăл çĕкленчĕ, аслатиллĕ çумăр пуçланчĕ.

Манăн куçсенчен куççуль пăчăртанса тухрĕ.

ПĔÇ ХУШШИ АПАЧĔ

Сире пĕр çекрет калам-ха (тутине аллипе хупласа кулать– *Авт.*). Качча кайрăм вĕт! Хопах ушкăнь ухмахĕ, Çеркей ятлăскер, мана та, хĕр ачама та килне илсе пычĕ!

Çурчĕ пы-ысăк, картишĕ, вити-лупасĕ тата пысăкрах! Ĕне,сурăх, сысна, качака пур. Амăшĕ чирлĕ выртать. Çеркей пире илсе килсен виççĕмĕш кунах шапаша тухса кайрĕ.

"Кин, – тет хайхи карчăк, пĕте пĕлменскер, – пĕç хошши апачĕ полсан аванччĕ те..." Эпĕ Шăмăршă енчен, вирьялсем калаçнине ăнлансах пĕтерейместĕп. "Мĕн, картли, пĕç хошши апачĕ?" Ăнланманнипе тепĕр хут ыйтрăм унтан. "Ара, ĕнене суса кĕресчĕ те..." – каллех йăнкăртатать карчамас. Çав мĕлкешĕн витре çĕклес çукчĕ, хамăн хĕрĕме ăшă сĕт кирлĕ тесе тухрăм картишне.

Суман эп халиччен ĕне. Усраман эпир килте ун пек вырăнăх. Карчăк "пĕç хошши апачĕ" терĕ те, ĕнине хыçалтан, пĕç хушшинчен, сума лартăм. Хўри чăрмантарать. Ăна çавăрса хурса хырăмĕ урлă кантрапа çыхрăм. Мăш-мăш туса хыçалалла пăхать, эсремет. Сутарасшăн мар. Хўри çыхнă кантрана татса ячĕ. Кăшкăрса та хăратма çук усалскере.

Ĕнепе качаки пĕр каварлă пулас тата... Кăшкăрашнă вăхăтра сухаллă эсремет мана хыçалтан пырса тăрăслаттарчĕ. Чут çеç ĕне айне ўкеттĕм. Сунă пек сĕчĕ тăкăнса кайрĕ.

"Йĕтит-кутрит, сана паян сумасан çын та пулмастăп!" – тесе кўршĕсем патне каçрăм. Çенĕк, пўрт урайне мунчала мар, кусар

та пырса перĕнмен. Веç çĕрсе, пăнтăхса кайнă.

Пӳртĕнче çын пур, хĕрарăм тем айланать. "Эс Çеркей арăмĕ, кин полтăн-çке", – текелет. "Мĕн аму хыçĕ кин-и эп саншăн?" – тесшĕнччĕ, шарламарăм. "Ĕне сăваймастăп, алăсем чĕтреççĕ. Сĕтел çинчи стакана та тултараймастăп. Сăмакун ярса ĕçтер-ха", – тилмĕрет çакскер. Кирлĕччĕ пуль мана санпа аппаланма! Çиллĕм иртсе кайтăр тесе пĕрремĕш стаканне хам хаплаттартăм. "Алăран ан тыттар, усси пулас çук, пĕтĕмпех тăкса яратăп. Стакана тулли ан тултăр, хĕррине шăлсен хушшине хĕстер", – вĕрентет мана катемпи. Стакана шăлĕсен хушшине хĕстерсе пуçне каçăртрĕ те веç ĕçсе ячĕ. Виçĕ хутчен тултарса патăм. Юлашкине ĕçсе ярсан урайне пăрахнă чаппан пекки çине тĕшĕрĕлчĕ.

Тепĕр кӳршĕ патне те кĕрсе тухрăм. Алăкне уçрăм та, ах, паччушки, йывăр шăршă кӳ-ӳ-ӳ! килчĕ. Кунта та пĕччен хĕрарăм чирлĕ выртать. "Çӳрейместĕп. Ĕне усрама пăрахни те пилĕк çул çитет. Пиртен тăвата кил урлă пĕр çамрăк арăм пурăнать. Çавăн патне кай. Ĕнине сусан ик-виç курка мана та пырĕччĕ те, чĕре сури тăвăттăм", – сăмахлать çак каска.

Утрăм тухса. Çулпа лашанни евĕр вăрăм питлĕ, хăрах куçлă ар çын пырать. Хăй ни ватă мар, ни çамрăк мар. Таçтан паллать мана. "Эс Мами Çеркейĕн çĕнĕ арăмĕ вĕт. Ăçта каятăн?" – тет. Эп сăмах вылятса тăмарăм. "Ĕне суса пар-ха?" – терĕм. "Халех. Хатĕр. Ĕненӳ те, хăвна та сума пултаратăп", – лĕкĕртетрĕ лаша пит.

Ертсе кĕтĕм çакна витене. Манран халата илсе тăхăнчĕ. Тутăр çыхтартăм. Хĕрарăм пек курăнасшăн. Ларчĕ. Ĕнине пĕç хушшинчен мар, малтан сăваççĕ-мĕн. Вăт, итле карчăксене! Туххăмрах çур витре суса пачĕ Лашапит. "Качакипе мĕн тăвăпăр тата? Качаки хĕсĕр пулмалла. Эс хĕсĕр пулас çук. Сана суса ярам мар-и?" – текелет, мана вите кĕтессине хĕстерме пуçларĕ. Мăкăльт çавăрса кăтартрăм шур куçа! Çеркейпе ирттернĕ сĕрĕмлĕ каç ырлăхĕ те сĕвĕрĕлсе çитмен те, сана, Лашапите, хам çывăха яратăп-и? "Ыран та ĕне сума килетĕп, пĕр чĕлхе тупăпăр-ха. Çеркей вăл час таврăнас çук", – ясар куçне выляткалать çакскер.

Кĕтĕм пӳрте. Сĕт витри çине пăхса карчамас чĕвĕл-чĕвĕл калаçать. "Кинĕмçĕм, тĕпренчĕкĕм. Çакнашкал ăшă сĕт ĕçсен паян-ыран ура çине те тăратăп пуль-ха. Хальхинче ман Çеркей телейлĕ пулчĕ", – текелет, хĕрĕме çӳçĕнчен ачашласа.

"Пит кирлĕ пуль мана сан патăнта ĕне суса, выльăххуна

апат парса пурăнма. Ыран-тепĕр кунсенче сыснуна çаптарасчĕ-ха: какай пулать. Пĕр-ик сурăхна сутасчĕ: укçа пулать. Кирлĕ мана сан Çеркейӳ", – чутах сасăпа каласа яраттăмччĕ, чĕлхене тытса чартăм.

Ыран çиттĕр-ха. Курăпăр унта мĕн тăвассине!

КАРЧĂКСЕМ КАЧЧА КАЯСШĂН

Пуриншĕн те паллă: аллă пилĕк тултарсан хĕрарăмсене пенси пама пуçлаççĕ. "Канччăр, мăнукĕсене пăхчăр, кил-çуртра тĕрмешчĕр", – тет ĕнтĕ патшалăх пирĕн савнă арăмсене арçынсенчен маларах тивĕçлĕ канăва ăсатса. Çук, канасшăнах мар çав пирĕн вăрăм çӳçлĕ чун ăшшисем! Хапрăк-савăтра, стройкăра, колхозра ĕçлекеннисем пирки каламастăп-ха эпĕ. Йывăр ĕçпе çĕмĕрĕлсе вĕсем вăхăтсăрах ватăлаççĕ, пенси çулĕ çитессе сар кайăк çу кунĕсене кĕтнĕ пекех кĕтеççĕ. Çĕр çинче хура ĕçпе тăранса пурăнакан хĕрарăмсем кăна мар-çке. Вĕсемсĕр пуçне кантурсенчи сĕтелсен хушшинче пукана ăшăтса шурă хута пĕр енчен тепĕр енне, тепĕр енчен пĕр енне куçаракан, шкулсенче ача кĕтӳçинче пурăнса ват енне кайнăçемĕн хăйсем те ача ăслă пулса пыракан, банксемпе хысначействăсенче укçа хуралĕнче ларакан, ăнсăртран пуçлăха ларса пуçлăх ĕçĕ виличченех тумалли ĕç тесе шухăшлакан хĕрарăмсем те пур-çке-ха. Инкек çăпатисемех çав ĕнтĕ вĕсем.

Эпĕ хам ялта пурăнатăп, хулана та тухса çӳрекелетĕп. Çамрăк мар ĕнтĕ, тепĕр икĕ çултан çитмĕле çитетĕп. Колхозра платникре ĕçлесе утмăлта пенсие тухрăм. Хăш-пĕр хĕрарăм "паттăрлăхĕнчен" тĕлĕнме пăрахмастăп. Акă хамăр ялти Васса Сидоровна Белебеева учительницăнах илер. Пĕлтĕр çитмĕл виççĕ тултарчĕ. Халĕ те шкултах ĕçлет-ха. Мана хама та, ачасене те вĕрентнĕ вăл. Халĕ мăнукăмсене "уроксем" парать. Маруçпа Мишша юратаççĕ ăна. Васса Сидоровна урок пынă вăхăтра çывăрса кайнă, тепĕр чухне кĕтмен çĕртенех юрласа янă е ĕсĕклесе йĕме пуçланă пирки çеç кăштах тĕлĕнеççĕ. Çынна утмăл çула çитсен ултă çулхи ача ăсĕ кĕрет теççĕ те, Васса Сидоровна утмăлта мар, çитмĕл виççĕре. Вăл урокра юрланăшăн тата макăрнăшăн мĕн тĕлĕнмелли пур!

Хамăрпа пурăнакан ывăлăн аслă хĕрĕ Светлана кăçал шкултан вун пĕр пĕтерсе тухрĕ. Шупашкарти университет-институтсене укçа тӳлемесĕрех вĕренме кĕме май çук. Светлана

хулана-мӗне тухсах ҫӳремен, ашшӗ-амӑшӗ ерҫеймест. Мӑнукӑмпа тӗп хулари пӗр института хамах кайса килес-ха терӗм. Кайрӑмӑр, ҫитрӗмӗр. Институт ректорӗ патне кӗмелле пулчӗ. Ректорӗ ҫитмӗлелле ҫывхарса пыракан, кӗмӗлленнӗ ҫӳҫлӗ карчӑк-мӗн. Кӑштах пӗлетӗп-ха эпӗ ӑна. Пӗр хӗрӗх ҫул каялла вӑл пирӗн район центрӗнчи пульницӑра тухтӑр пулса ӗҫлетчӗ, сангигиена ыйтӑвӗсемпе лекци тӑватчӗ, партконференцисенче вирлӗ калаҫатчӗ. Ӑна районта нумай ӗҫлеттермерӗҫ, Шупашкара илсе кайрӗҫ. Министрта та, обком секретарӗнче те ӗҫлесе пӑхрӗ. Халӗ институт ректорӗ.

– Мӑнукна экзаменсӑрах илетпӗр. Вӗреннӗшӗн ҫулталӑкне ҫирӗм тӑватӑ пин тенкӗ тӳлемелле, – тет ҫакскер.

Килӗшмеллех пулчӗ. Ялта хӗл каҫнӑ вӑкӑр, амӑшай пӑру пур. Ҫавсене сутма пулать. Пенси укҫине перекетлӗ тыткалатӑп. Тутлӑ ҫисе пылак ӗҫме хӑнӑхнӑ ректор вӗреннӗшӗн тӳлемелли укҫана ан ӳстертӗрччӗ ҫеҫ. Ун пек карчӑксенчен тем те кӗтме пулать.

Аслӑ ывӑлӑм ман тӗп хулари пӗр пысӑк кантурта ӗҫлет. Ун патне ӗҫне кайрӑм. Светланӑпа иксӗмӗр виҫҫӗмӗш хута хӑпартӑмӑр. Алӑксем ҫине ҫырса хунӑ хушаматсене вулатӑп. Апайтур, пӗр алӑкӗ ҫинче эпӗ пӗлекен хушаматах. Ячӗ те унӑн. Ку хӗрарӑм та (карчӑк тесен те юрать) ӗлӗк пысӑк вырӑнта тӑркалатчӗ, яла пырса ҫынсемпе тӗл пулнӑ чухне коммунизмшӑн кӗрешме чӗнетчӗ. Коммунизмшӑн "юрӑхлӑ" ҫын пулнӑскер, капитализмшӑн та ытлашши ҫын пулмарӗ пуль. Юлашки ҫулсенче Раҫҫей правительствин пирӗн республикӑри пӗр ведомствине ертсе пычӗ. Пенси вӑхӑчӗ иртсен те виҫӗ-тӑватӑ ҫул ӗҫлерӗ. Ҫитмӗл еннелле алӑк уҫнӑскере, нумаях пулмасть тивӗҫлӗ канӑва ӑсатнӑ тесе хаҫатсенче пӗлтерӳ пачӗҫ. Каять сана ун пек маттур карчӑк пенсие! Ывӑлӑм ӗҫлекен пысӑк ҫуртри пысӑк кантур пуҫлӑхӗн пӗрремӗш ҫумӗ халь вӑл. Вӑт сана пыр та калаҫ унпа.

Тӗлӗне-тӗлӗнех Шупашкартан хамӑр яла каякан автобус ҫине лартӑм. "Мӗн тӗлӗнмелли пур-ха", – тетӗп хама. Хамӑр райцентртах акӑ Гликерия Силовна врач вӑтӑр ҫула яхӑн шӑл сиплесе пурӑнчӗ. Ҫитмӗл иккӗ тултарсан ӑна сиплев ӗҫӗнчен хӑтарчӗҫ. Вӑл лартнӑ пломбӑсем иккӗмӗш кунах тухса ӳкнӗ пирки шалӑпсем нумай пулнӑ-мӗн.

Вара Гликерия Силовна шӑл кӑларма пуҫларӗ. Ҫитмӗл тӑваттӑччен ӗҫлерӗ. Каймастчӗ пулӗ, анчах та ҫакскер пӗррехинче

инкеклĕ шăл тĕлне пулнă. Çав шăла кăларнă чухне чирлĕ çынни мар, Гликерия Силовна хăй тăнсăр пулса ӳкнĕ имĕш. Çавăн хыççăн тин тивĕçлĕ канăва тухрĕ паттăр карчăк.

Уй-хирте, выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекен хĕрарăмсем пенси çулĕ çитессе сар кайăк çуллахи кунсене кĕтнĕ пек кĕтеççĕ терĕм-ха эпĕ. Кĕтмесĕр! Вĕсен алли-ури ыратать, куçĕсем вăйсăрланнă. Çапах та ял-ялĕнче пурнăçне унта-кунта тĕрткеленсе ĕçлесе ирттернĕ хĕрарăмсем те çук мар. Песплат çул çӳремелли документ тутарнă хыççăн вĕсен пурнăçĕ уйрăмах "уçăлса" каять. Ялтан райцентра çӳрекен автобуса "штурмлама" тытăнаççĕ çак карчăк-карчамассем. Сĕте акă хамăр ялтах пуçтараççĕ. Хакĕ те аванах. Анчах Çинккасемпе Шурккасене ялти хак тивĕçтермест. Сĕте вĕсем райцентрта е хулара сутса ытларах тупăш тăвасшăн.

Ялта чиркӳ пур çĕртех салари чиркĕве çӳрекен карчăксем йышлă. Ялти Николай пачăшкă ватă имĕш, çулла та кăçатăпа çӳрет, сасси çук, начар юрлать, çӳçĕ сайралнă, сухалĕ – виç пĕрчĕ. Салари Амбросий атте çамрăк, яштака та хитре, сасси уçă, ӳкĕт сăмахĕсене чĕре патне пымалла калать. Эй-й-й, мĕнле кăна сăлтав çук-ши хӳрисене çула тухма тӳлесе хунă карчăксен. Акă хамăр кӳршĕри Суня карчăкăн хĕрĕ çичĕ çухрăмри Туруш ялне качча тухнă, унта пурăнать. Пирĕн ялтан хулана çӳрекен автобус Туруш хĕррипе иртет. Çавна май автобус çине ларса кашни кун хĕрĕ патне кайса "тĕрĕслесе" килет Суня карчăк. Çак сакăр вун иккĕри кинемейĕн тĕнчере пĕлмен япали, палламан çынни çук. Ял халăхĕ ăна, Суня мар, Дельтаплан тесе чĕнет.

Çак шухăшсемпе аппаланса пынă май автобус райцентра çитсе чарăннине те сисмерĕм. Кунта ларакансем пулчĕç. Çĕнĕ пассажирсем хушшинче хамăр ялти Настя кумана курах кайрăм, хампа юнашар лартрăм. Настя та иртнĕ çул çитмĕл тултарчĕ. Телейпе хуйхă хушшинче иртсе пырать унăн пурнăçĕ. Çирĕм-çирĕм пилĕк çул каялла упăшки пур çинче хăйĕнчен чылай ватăрах хусах старикпе çыхланса кайнăччĕ манăн кума. Лешĕн ача çураттаракан япали питĕ хӳхĕм тетчĕç. Çакăн хыççăн Коля кум чăтаймарĕ, çакăнса вилчĕ. Настя ашшĕ çулĕнчи çак старике киле кĕртсе пурăнчĕ. Еркĕнĕн ача çураттаракан хатĕрĕ чаплă пулсан та кума ача çуратаймарĕ. Икĕ-виçĕ çул каялла старик вилчĕ.

– Настя кума, мĕн çăмăлпа çӳретĕн. Пасара е ясара килтĕн-и салана? – шӳтлеме хăтлантăм эпĕ.

– Коля кум, санран пытармастăп. Пасарĕ те, ясарĕ те пĕрлех пулчĕç пуль-ха кунхинче. Хамран вун пилĕк çул ватăрах çынпа çирĕм пилĕк çул савăнса пурăнтăм. Вилчĕ. Çитмĕл çултах ватăлса ларас теместĕп-ха. Халĕ хамран вăтăр çул çамрăкраххине шыратăп. Япали те Яшăннинчен япăхрах ан пултăр. Салари бомжăсем хушшинче çавăн пек çынсем пур тени хăлхана кĕчĕ. Çавсемпе тĕл пулма пасара килтĕм. Çӳрени ăнăçлах пулчĕ. Çаклатрăм пĕрне. Ав, хыçалти ларкăч çинче ларса пырать, – пӳрнипе мăн сăмсаллă, çăмламас куçлă этем çине тĕллесе кăтартрĕ Настя кума.

Лешĕ мана куç айĕн юнавлăн шăмарнинчен шикленсе эпĕ шыв сыпнă пекех чĕмсĕрлентĕм, Настя кумапа сăмахлама пăрахса пуçа автобус кантăкĕ еннелле пăртăм.

КИЛТЕ ЁÇЛЕКЕН КИРЛĔ

Кĕтмен-туман çĕртен тетьă Машăн упăшки дядьă Миша вилсе кайрĕ. Вĕсен ача пулман та, мана, сестрин хĕрне, тетьă Маша хăйĕн пепки пекех юрататчĕ. Дядьă Миша та, "Хĕрĕм, чĕкеçĕм" – тесе кăна тăратчĕ. Çуллахи вăхăтра, вĕсем дачăра пурăннă чухне, миçе чувака илсе кĕрсе ырă курман пулĕ эпĕ тетьăпа дядьăн двухкомнатнăй хваттерĕнче!

Дядьă вилсен пурăнма яланлăха тетьă патне куçрăм. Килте мамăпа сестра юлчĕç.

–Ну, Эльза, халĕ аптрамастпăр ĕнтĕ иксĕмĕр. Магазина кайма та, урай çума та, апат пĕçерме те эсĕ пур. Ĕç пирки ан кулян. Ху пĕлетĕн, эпĕ пенсие министерствăран тухрăм, иксĕмĕре çитет, – терĕ пĕрле пурăнма тытăнсан тетьă Маша.

Ан тĕлĕнĕр те, эпĕ халиччен магазина çăкăр илме кайса курман, урай çума, суп е каша пĕçерме мана никам та хушман. Ку ĕçсене пĕтĕмпех манăн сестра, Вера, туса пынă. Эпĕ тутапа чĕрнене лайăх хĕретме, куçа хуратма, дискотекăна çӳреме, моднăй тăхăнма маçтăр.

Çапах та килти ĕçсемпе аппаланма кăмăл çуккине тетьăна каламарăм. Вăл мана шаннине урăхла майпа сирсе яма шухăшласа хутăм. Ялан чирлесе пурăнакан тетьă пĕррехинче мана çăкăр илме хушса ячĕ. Темиçе магазина çитсе заварной хлеб туянтăм. Çăкăрĕ тăпра пек хуп-хура та типĕ, темшĕн пылак тата... Диабет чирĕпе аптракансене çиме пĕçернĕ тет-и? Мана çăкăр кирлĕ мар! Эпĕ сардельки-сосискипе, котлет-бифштекспа

йăпанма, коржик-пончиксемпе кофе ĕçме юрататăп. Суп тенине (пĕчĕк чухнехине шутламасан) халиччен те сыпса курман.

Заварной хлеба тетья виçĕ кун хушши çирĕ. Ун хыççăн мана çăкăр-булка туянма магазина ямарĕ. Тепрехинче вăл чай туянса килме хушрĕ. Тетьă хваттерне эпĕ хаваспах симĕс чай илсе таврăнтăм.

– Эй-э-эй, санпа, Эльза, Ара, эпир Каспи-Кавказ çыннисем мар-çке-ха. Ĕмĕрне те ĕçсе курман эпĕ ăна. Ĕçессĕм те çук! – кăмăлсăрланчĕ тетьă.

– Ĕçмен пулсан ĕçсе кур; мана чей кирлĕ мар. Кофе е какао пулсан çитет, – сăмах хушмасăр чăтаймарăм хам та.

Тетьăна виç уйăх ĕçме те çитетчĕ пулĕ та чайĕ, анчах вăл унпа усă курас темерĕ, çӳп-çап карçинккине чăмтарчĕ.

Вырсарни кун вăл мана урай çуса тухма хушрĕ. Хăех ведропа лĕп шыв тултарчĕ, тряпка тупса пачĕ. Вăл сисмен хушăра эпĕ цветок чӳлмекĕнчен пĕр ывăç тăпра чавса илсе ведрори шыва чăмтартăм. Хама тăрăшсах, тар юхтарсах ĕçленĕ пек кăтартас терĕм: урайĕ ула-чăла, йăрăмлă-йăрăмлă рисункăланса типрĕ. Тетьă ассăн сывласа илчĕ те урайне тепĕр хут хăй çуса тухрĕ.

Çавăнтанпа вăл мана пĕр ĕç те хушмасть. Эпĕ сăрланатăп, чиперленетĕп, шикарнăй тăхăнса дискотекăна кайма хатĕрленетĕп. Тетьă ман çине пăхса тăранаймасть. – Ах, ытла та илемлĕ хĕр-çкеэсĕ, Эльза! Сана пĕр кашăк шывпа çăтса ямалла. Урай çумалла-и санăн аллусемпе! Министерствăсенче мана пĕлекенсем халĕ те ĕçлеççĕ-ха. Çавсем урлă сана приемнăйне секретаре вырнаçтармасан эпĕ этем те пулмастăп, – хавхаланса калаçма пуçлать ун пек чухне тетьă. Юлашки вăхăтра вăл ир кӳлĕм телефонпа унта та кунта шăнкăравлама пуçларĕ. Пĕринпе калаçать, тепринпе... Йăпăлтатать, унижаться тăвать. Пĕр-пĕр приемнăйа секретаре вырнаçтаратех пуль-ха вăл мана.

Каçсерен давлени хăпарса кайнипе вырăн çинче выртать. Шел тетьăна. Килти ĕçсене унăн пĕтĕмпех хăйĕнех тума тивет. Чирĕ çăмăл чир мар. Вилсе каясран хăратăп. Проблеми хăй пирки мар-ха, унăн пысăк пенсийĕ те пĕтет-çке-ха вăл вилес пулсан. Халĕ эпĕ телефонпа киле килсе ĕçлеме килĕшекен домработница шыратăп. Тупăнать пуль-ха. Сирĕн ялта çук-и ун пек хĕрарăм. Тупма пулăшăр-ха? Ахаль тумăп.

КАЛПАКЛĂ ЧАПАНЬ

Чапань Кçатпана "Раççей культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ" хисеплĕ ят пачĕç. Тĕлĕнет Чапань. Чăннипех те телейлĕ мĕнвăл. Амăшĕ ăна: "Чапань, эсĕ кĕпепе мар, калпакпа çуралтăн. Калпакпа çуралакансем кĕпепе çуралакансенчен те телейлĕрех", – тетчĕ. Тĕрĕс каланă амăшĕ. Кур-ха ĕнтĕ, çĕршыв культуришĕн мар, хăй çуралса ӳснĕ Кивĕ Хупкĕпер ялĕн культуришĕн те нимĕн тумасăрах Чапань Раççей шайне çĕкленчĕ.

Мĕнле пуçланчĕ-ха çапла çӳлелле ши! те пи! каясси? Ара, ачаранах мар-и? Шкулта çырса тата сăмахпа каласа "5" паллă илекенсем, Чапаньрен маттуртараххисем пайтахчĕ. Кĕçĕн классенчех Кçатпан тускана таса тытнипе, аттине лайăх çуса кĕнипе, класра шăп ларнипе, учительницăн кĕтӳрен таврăнман ĕнине хăваласа килсе картишне кĕртсе янипе палăрса тăратчĕ.

Вун çиччĕре автошкултан вĕренсе тухсан вăл пĕр вăхăт колхозри грузовике çӳретрĕ. Кивĕ Хупкĕпер райцентртан инçе мар та, асăрхарĕç пулмалла ăна унта. Çартан таврăнсанах Чапане пĕр кантура шофера илчĕç. Унтан ăна тепĕр кантура куçарчĕç. Ку кантурĕ районти чи çӳллĕреххиччĕ. Унăн пуçлăхĕ Курцов Чапане машинине яланах таса тытнăшăн, пĕр сыпкăм та эрех ĕçменшĕн юратрĕ. Кунта руль çавăрсах Чапань Кçатпан авланчĕ, ача-пăчаллă пулчĕ, вăтăр çултан иртрĕ. Ăравасăр хытă юратнипе Курцов ăна шофер ĕçĕнчен хăтарса хăйĕн пулăшаканĕ туса хучĕ. Ĕнер кăна руль умĕнче ларнă Кçатпан хут çырма пуçларĕ. Вунă çул анчах вĕреннĕ Чапане хут çырма çăмăлах мар-мĕн. Йăнăш хыççăн йăнăш тăвать, икĕ сăмаха та йĕркеллĕ çыхăнтараймасть. Мĕн тумалла Чапаньпе? Каялла шофера лартас – çынсенчен аван мар. Нимĕн тăвайман енне Курцов ăна Чулхулари парти шкулне, халăх хушшинче "ватă панккавсен шкулĕ" ятпа çӳрекен ВПШна вĕренме ячĕ. ВПШна кĕнĕ чухне те телей пулчĕ Кçатпанăн. Диктант çырма Чапань Чĕмпĕр вырăсĕпе юнашар ларчĕ те пĕтĕмпех унтан "пĕçертсе" илчĕ. Тăвата çул вĕренчĕ Кçатпан. Чулхулапа Кивĕ Хупкĕпер хушшине лайăх такăрлатрĕ. Арăмĕ маттур çав! Чапань хулара чухне те вăл килти кайăк-кĕшĕк, вильăх-чĕрлĕх йышне чакармарĕ. Хур, кăркка тушкисем, сыснавăкăр пĕççисем Чапане партин аслă шкулне пĕтерсе тухма нумай пулăшрĕç.

Района таврăннă чухне унта Курцов çукчĕ ĕнтĕ. Пуçлăхра Свинцов ĕçлетчĕ. Чапань валли алхапăлах вырăн тупаймарĕç,

алпатлӗ ӗҫ ҫук пирки ӑна райхаҫат редакторӗн ҫумӗ пулса ӗҫлеме хушрӗҫ. Чапань хаҫата очерк-тӗрленчӗк мар, икӗ йӗркеллӗ хыпар та ҫырса курман. Пенси ҫулне ҫывхарса пыракан Феофил Ферапонтов редактор ҫавӑнпах пулӗ Чапане сиввӗнрех кӗтсе илчӗ. Кунта та аптӑрамарӗ Кҫатпан, "Хӗрлӗ кӗпер" хаҫатра самаях пысӑк статьясем ҫапса кӑларчӗ. Ҫырасса хӑй ҫырмарӗ-ха вӗсене. Каркас пекки хӑртаклать те, ӑна ҫырас енӗпе темиҫе "йытта" ҫисе янӑ Сильвестр Сидӑрч патне йӑтса кӗрет. Лешӗ, редакцире ял хуҫалӑх пайӗн пуҫлӑхӗнче ӗҫлекенскер, Чапань лавккаран "шлемлӑ Шемеккее" (эрех ӗнтӗ) илсе киличчен статьяна ҫырса та хурать. Ҫур ҫултан Ферапонтова пенсие ӑсатрӗҫ, Кҫатпан редактор пулса тӑчӗ. Феофил Силыч килте ларас темерӗ, хӑй ҫирӗм ҫул ытла алӑ пусса кӑларнӑ хаҫатрах литература сотрудникӗнче ӗҫлеме кӑмӑл турӗ. Чапань ӑна вырӑн памарӗ, "Ӗҫет" тесе Сильвестр Сидӑрча та редакцирен тасатрӗ...

Кҫатпаншӑн хатӗр хаҫата алӑ пусса кӑларас ырӑ вӑхӑт пуҫланчӗ. "Ерҫейместӗп" тесе каламалли ҫук: "Хӗрлӗ кӗпер" эрнере виҫӗ хут ҫеҫ тухать. Пушӑ чухне Чапань машина рульне хӑех ҫавӑрттарса (ӗлӗк шофер пулнӑ-ҫке-ха) кирпӗч завочӗсене, лесничествӑсене ҫӳрерӗ, кӗрхи-ҫурхи кунсенче тӗп хулари пуҫлӑхсем патне аш-пӑш, пахча ҫимӗҫ, тӗтӗмленӗ пулӑ (райцентрта пулӑ комбиначӗ пур) турттарчӗ. Редакторта тӑват-пилӗк ҫул ӗҫлесе Кивӗ Хупкӗперте пысӑк ҫурт лартрӗ. Райцентрта хваттер илчӗ. Хаҫачӗ ни лайӑх, ни начар тухса тӑчӗ. Тепӗр виҫӗ-тӑватӑ ҫултан Чапане республика культурин тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ туса хучӗҫ, Шупашкара аш-пӑш, чӑкӑт-ҫу "киммине" ҫӳретни ахаль пулмарӗ ун тӗлӗшӗнчен.

Кӳршӗри районсемпе хуласенчи редакторсем ик-виҫ хутлӑ ҫӗнӗ ҫуртсем туса лартса редакци-типографисене унта куҫарчӗҫ. Чапанӗн ун пек ӗҫпе аппаланма кӑмӑл пулмарӗ. Ӑна колхозсем пуҫланиччен ҫӑмарта сутти туса пуйнӑ хуҫаран туртса илнӗ ҫуртрах ӗҫлеме аван пек туйӑнчӗ. Полиграфи машинисене улӑштарма та васкамарӗ вӑл.

Пурӑнсан-пурӑнсан ҫӗнӗ вӑхӑт ҫитсе ҫапӑнчӗ. Пуҫлӑх пуканӗсем ҫине ҫӗнӗ ҫынсем ларчӗҫ. Хур-кӑвакал нумай усрани, сыснасене хӑвӑрт самӑртни, арӑмӗ килте икӗ ӗне суса пурӑнни Чапане ҫӗнӗ пуҫлӑхсемпе хӑвӑрт паллашма май пачӗ. Ытти редакторсем хаҫат ячӗсене улӑштарса, офсет меслечӗ ҫине куҫса муталанчӗҫ. Чапань редакцилекен хаҫат ҫав-ҫавах "Хӗрлӗ кӗпер"

ятпах тухса тăчĕ ăна пичетлесе кăларасси те унчченхи меслетпех пулса пычĕ.

Юлашки вăхăтра Кçатпана Мускав чапне курас шухăш канăçсăрлантарма пуçланăччĕ. Мĕн туса тĕлĕнтерме пулать-ха кĕнеке-хаçат таврашĕнче йăраланакан мăн пуçлăхсене! Калпакпа çуралнă пуç каллех пулăшрĕ Чапане. Вăл "Хĕрлĕ кĕперĕн" хапине (форматне) улăштарма тытăнчĕ. Пĕрре хаçата ал лаппи пысăкăш, тепре сăмса тутри пек, виççĕмĕшĕнче шăналăк евĕрлĕ кăларса тĕлĕнтерсе пĕтерчĕ Чапань вулакан халăха. Тĕп хулари пуçлăхсем те асăрхарĕç ăна, "демократи тапхăрĕн новаторĕ" тесе хаклама пуçларĕç, Раççейĕн Хисеплĕ ятне пама хутсем хатĕрлесе Мускава ăсатрĕç. Мускав нумай кĕттермерĕ...

Паян-ыран пенсие каяс тенĕ чухне Кçатпан Раççейĕн мухтавлă çынни пулса тăчĕ. Хаçата вăл халĕ те нимĕн те çырмасть. Çырма та пĕлмест. Пенсие тухсан литсотрудникре юлас тесе те тĕмсĕлсе çӳрес çук. Литсотрудник алă пусса лармасть, унăн çырмалла. Çырас ăсталăх вара Кçатпанăн çерçи сăмси чухлĕ те ӳсеймен.

Кçатпан юлашки вăхăтра тĕп хулари Тĕп суйлав комиссийĕн алăкĕсене уçса-хупса çӳрет. Районсенчи суйлав комиссийĕсенче те шалу илсе ĕçлекен председательсем пулмалла тенине илтнĕ вăл. Пенсири Кçатпаншăн çакăнтан та алпатлĕрех ĕç ăçта пултăр! Суйлавсем çулталăкра пĕрре е иккĕ иртеççĕ. Ытти вăхăт пушă. Лар кĕрĕк арки йăвалаcа, е киле кайса хур-кăвакала, кăрккасене урпа сапса пар. Ĕç укçи илсе ведомăç çине алă пус, пенси перекет кĕнеки çинче пуçтарăнса пытăр.

Чапань вăй питти-ха. Унăн çӳçĕ те шуралман. Ĕмĕрне çăмăл ĕçпе ирттерчĕ. Вăл çĕнĕрен пурăнма пуçласшăн. Пуçлать те пулĕ. Çак кунсенче Чапань пĕр пысăк пуçлăх пӳлĕмĕнчен пысăк хавасланхпа, йăл-йăл кулкаласа тухнă теççĕ...

ЧĂВАШ ПОЭЧĔ ХĂРĂК ТУРАТ МАР...

Чапань Кçатпан хăйĕн пĕр вырăнлă кравачĕ çинче çывăрса кайнăччĕ кăна, арăмĕ: "Чапань, телефон патне!" – тесе вăратрĕ. Чăваш халăх поэчĕ Ваçлей Давыдов-Анатри шăнкăравлать-мĕн, хăйĕн юбилей каçне чĕнет. "Литература музейĕнче пуçлатпăр, кайран наци библиотекине куçатпăр", – тет хайхискер. 85 çул тултарать халăх сăвăçĕ, нумай-нумай юрă сăмахĕ çыраканĕ. Чапань ăна темиçе ăшă сăмах каларĕ, юбилей каçне

пыма шантарчĕ.

Акă каллех вăл – сивĕ хваттерĕнчи хытă вырăнĕ çинче. Хулăн утиялпа лайăх витĕннĕ пулсан та урисем ăшăнма пĕлмерĕç, кăмăлĕ темшĕн пăсăлчĕ. "Музей, библиотекăн вулав залĕ... Халăх сăвăçне çапла чысламалла-ши? Ун пек чухне йыхравне чыслă кантуртан лайăх конверт ăшне чиксе пуштăпа ярса параканччĕ", – мăкăртатрĕ Чапань Кçатпан.

Тепĕр самантран Илле Тăхти çырнă ятсăр сăвăри "Чăваш поэт пуличчен хăрăк турат пулас-мĕн" текен йĕркесене аса илчĕ. Вара çывăрса кайрĕ.

Акă тĕлĕк курать. Ваçлей Давыдов-Анатрин юбилей каçĕ наци библиотекинче мар, чăваш патшалăх академи драма театрĕнче пырать пек. Аслă поэтăмăра чыслама правительство уйрăм йышăну кăларнă пек. Халăх мраморпа илемлетнĕ фойерен курав залне кĕрсе вырнаçрĕ. Партерта та, балконра та пĕр пушă пукан çук. Сцена çинче – республика Президенчĕ, культурăпа национальноçсен ĕçĕсен министрĕ, Шупашкар мэрĕ, Чăваш Республикин Пофессионал Писательсен союзĕн правленийĕн председателĕпе унăн çумĕсем, халăх сăвăçисем, творчество союзĕсен ертӳçисем, ĕçпе чапа тухнă çынсем. Юбиляр çӳллĕлетнĕ пукан çинче уйрăм ларать. Залра композиторсем, юрăçсем, художниксем, артистсем, поэтсемпе писательсем, журналистсем, ытти регионсенчен килнĕ хăнасем йышлă.

Юбилей каçне культура министрĕ уçрĕ те тӳрех Президента сăмах пачĕ. Н.В.Федоров халăх поэчĕн кăкăрĕ çине "Тăван çĕршыв умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн" орден çакрĕ, пурте ура çине тăчĕç. Пуçтарăннă халăх тăвăллăн алă çупать. Сцена хыçĕнчен чăваш тĕрриллĕ кĕпе, тухья тăхăннă икĕ хĕр тухрĕ. Пĕрин аллинче хĕрлĕ роза çыххи, теприн – пĕчĕк патнус. Президент халăх сăвăçне Чăваш Правительстви "Жигули" автомобиль парнелеме йышăннине пĕлтерчĕ. Василий Ивановича машина уççи тата чечексем тыттарчĕ.

Акă Шупашкарăн хисеплĕ гражданинне Василий Давыдов-Анатрине саламлама хула мэрĕ тухать. Ăшă сăмахсем каласа поэта Максим Горький урамĕнчи темиçе хутлă гаражра пĕр вырăн пани çинчен пĕлтерсе ордер тыттарать.

Культура министрĕ сăвăçа ют çĕршывра кăларнă тĕрлĕ тĕспе кăтартакан телевизор парнелерĕ. Давыдов-Анатрин пĕчĕк çĕршывĕ – Патăрьел районĕ, Аслă Арапуç ялĕ. Район кăлавипе

кооператив ертӳҫин сӑмахӗсем чӗре патне пымалла, парнисем сумлӑ пулчӗҫ.

Ун хыҫҫӑн Писательсен союзӗн председателӗ, унӑн пӗрремӗш ҫумӗ Василий Ивановичӑн пурнӑҫӗпе поэзинчи тата прозӑпа публицистикӑри пултарулӑхӗпе паллаштарчӗҫ, ӑна тав турӗҫ.

Ҫыравҫӑ юлташӗсенчен, композиторсенчен, художниксенчен, артистсенчен, хулари бизнесменсемпе предпринимательсенчен мӗн чухлӗ салам! Кашни парнепе пынӑ.

Чапань Кҫатпан хӑй ҫырас енӗпе мӗнех мар. Чӑваш халӑх поэчӗшӗн, ӑна ҫапла сумланӑшӑн савӑнса, мӑнаҫланса ларчӗ, тупанӗ ыратиччен алӑ ҫупрӗ. "Чӑваш поэчӗ – хӑрӑк турат мар", – пӑшӑлтатрӗҫ унӑн тутисем.

Юлашкинчен Василий Иванович хӑй сӑмах илчӗ. Ҫакӑн пек чыс тунӑшӑн президента, хула мэрне, министра пайӑррӑн, ыттисене пӗтӗмӗшле тав турӗ, сӑвӑ вуласа пачӗ. Йыхравпа пынисене пӳрне те каҫхи апата чӗнчӗ...

Аяк пӗрчи тӗлне хытӑ япала лекнипе Кҫатпан тепӗр енне ҫаврӑнса выртрӗ. Тӗлӗк татӑлчӗ. Чапань банкет мӗнле иртнине кураймарӗ.

ИРХИ МАРАФОН

Хăйне партин Комсомольскинчи райкомĕн пĕрремĕш секретарьне суйланă хыççăнах Родионов дисциплинăна хытарма тытăнать. Канашлăва пĕр минут кая юлса килнĕшĕнех колхоз председателĕсемпе кантур пуçлăхĕсене зала кĕртмест, кайран вĕсен "тĕкне" татать. Ирсерен çынсем ĕçе вăхăтра килнипе килменнине тĕрĕслет.

Пĕррехинче, ир-ирех Киров поселокĕнчен Комсомольскине таврăннă чухне, Родионов ларса пыракан çăмăл машина çул хĕррипе чупакан çамрăка хăваласа çитет, Ижеев шофер газикне тăп! чарса тăратать.

– Мĕнле çын ку, мĕншĕн чупать вăл? – ыйтать Михаил Родинович.

– Совин хушаматлăскер вăл, Дубовка ялĕнче пурăнать. Комсомол райкомĕнче инструкторта ĕçлет, – хуравлать Ижеев.

– Апла пулсан чуптăр. Кайрăмăр! – команда парать Михаил Родионов.

Чупакан Совин сехечĕ çине пăхса илет. Ĕç кунĕ пуçланасси 20 минут çеç юлнă. Акă вăл çулпа пыракан хăлтăркка грузовике чарма хăтланать. Лешĕ пысăк хăвăртлăхпа иртсе каять. Совин аптăраса ӳкмест, çул хĕрринче выртакан тункатана кустарса çул урлă пăрахать. Райпромкомбинат машини тункатаран пăрăнса иртмест, чарăнса ларать.

– Сăтăр чи пысăк хăвăртлăхпа! – хушать водителе кабинăна кĕрсе вырнаçнă Совин.

Райком картишĕнче чарăннă машинăран тухнă М.Родионов хăйĕн пӳлĕмне кĕме васкамасть-ха, комсомол райкомĕн ĕçченĕсем ларакан пӳлĕм алăкне уçса кĕрет.

– Ăçта-ха кунта сирĕн Совин хушаматлă инструктор? – ыйтать район пуçлăхĕ.

– Эпĕ пулатăп вăл Совин текенни. Сергей тесе чĕнеççĕ мана, Михаил Родионович, – чалт çеç сиксе тăрать яштака йĕкĕт.

Райком секретарĕ урăхран шăл шурри те кăтартмасть, мĕнле пырса кĕнĕ, çавăн пекех тухса каять.

Каç кӳлĕм Совина "пĕрремĕш" патне чĕнсе илеççĕ.

– Ырантан районти çул-йĕр участокĕн пуçлăхĕнче ĕçлеме пуçлатăр, Совин юлташ. Çулсене тункатасемпе пӳлме кирлĕ мар, çулсене юсас пулать, – кĕскен ăнлантарать район хуçи.

"НИ ФИГА ТА ЧАКМАСТПĂР"

Канаш районĕнчи "Канаш" колхозăн тĕп усадьби Чакаç ялĕнче вырнаçнă. Пĕррехинче райĕçтăвком председателĕн Ильинăн Чакаçа çĕрле вун икĕ сехет çитеспе телефонпа шăнкăравлама сăлтав сиксе тухать. Ун чухне телефонсем колхоз правленийĕнче тата пушар хуралĕн деповĕнче анчах пулнă. Пĕлет вăл: колхоз правленийĕнче çур çĕр çитеспе никам та пулас çук. Депора çын пулма кирлĕ. Васкасах вăл телефон кĕпçине тытать те: "Чагаси, Чагаси, Чагаси..." – тесе ыйтма пуçлать. Лерен телефона пĕр арçын тытать, кăштах итлесе тăрать те: "Ни фига та чакмастпăр", – тесе кĕпçене лап! пăрахать. Виçĕ-тăватă хутчен шăнкăравласа та Фома Ильич çак сăмахсене кăна илтет. Çурăлса каяс пек тарăхнăскер, райĕçтăвком шоферне ăшă вырăн çинчен тăратсах машинăпа Чакаçа çул тытать.

Шăхасантан (Ильин Шăхасанта пурăннă) Чакаçа çитме çирĕм çухрăмран та ытла мар. Райĕçтăвком председателĕ туххăмрах Чакаçа кĕрлеттерсе çитет. Пушар хуралĕн çуртне кĕрет. Мĕн курать-ха вăл чĕлĕм тĕтĕмĕпе тулнă пӳлĕмре? Сĕтел çинче пĕр-ик пӳрне чухлĕ сăмакун юлнă четвĕрт кĕленчи ларать, пушар хуралĕн начальникĕ кутник çинче харлаттарса çывăрать, телефон патĕнчех хĕрлĕ сăмсаллă вĕшле этем тайкаланса ларать. Фома Ильич вĕшле этеме çулса илсе виçĕ хутчен лайăх кăна шăхăртса ярать. Лешĕ, сасартăк урăлса кайнăскер, пӳлĕмрен пăкă пек сиксе тухса çухалать. Ильин кĕтесре ларакан тулли витрене йăтать та шывне кутник çинче выртакан çын çине ӳпĕнтерет. Этемĕ чалт

çеç ура çине сиксе тăрать. Хурал начальникне пĕр кана силленĕ хыççăн Фома Ильич çилли кăштах иртсе каять.

Тепĕр кунне ДПД начальникне ĕçрен хăтараççĕ, обществăри вырăнта ĕçкĕпе иртĕхнĕшĕн юлташла суда параççĕ.

КАНТĂКРАН КАНТРА ЯРСА

Малтанхи тапхăрта Тешков парти обкомĕн номенклатуринче чи шанчăклă кадрсенчен пĕри пулнă теççĕ. Çирĕп ăс-тăнлă, нумай вĕреннĕ, авторитетлă çын шутланнă вăл. Турă ăна тĕреклĕ те çӳллĕ кĕлеткеллĕ тунă, илемлĕ сăн-пит, вăй парнеленĕ. Обком йывăр вырăнсенче ĕçлеме яланах Тешкова шаннă. Пурăна-киле унăн кăлтăкĕ те сисĕнме тытăнать. Вăл эрех тыткăнне лекет. Пĕр-икĕ хутчен выговор панă хыççăн Ислюков юлашки шанăç пирки пĕлтерсе Тешкова республикăн аякри пĕр районне ĕçлеме ăсатать. Хайхискер, пĕр-икĕ уйăх лайăххах ĕçлет те ун хыççăн такăнмаллипех такăнать. Тешковшăн хура кунсем çитеççĕ, "запой" текенни пуçланать.

Арăмĕ тата обком тăрăшнипе ăна район пульницине вырнаçтараççĕ, шанчăклă хурал тăратаççĕ. Телефонпа Тешков мĕн калаçнине дежурнăй сестра хăлхине тăратсах итлет, кайран кирлĕ çĕре шăнкăртаттарать. Тунсăхлă та кичем пульницăра Тешкова. Тешков дежурнăй сестра умĕнчи телефон кĕпçине ирĕк ыйтса тытать та райкома шăнкăравлать. "Сергей Петрович, пульницăра вăхăт иртмест. Тĕнче классикĕсене вулас тетĕп. Илсе кил-ха кунта, ман пата, парткабинет библиотекинчен Дюма "отецăн" пĕрремĕшпе иккĕмĕш томĕсене. Эпĕ чӳречене уçса кантрапа сумка антаратăп. Каçхине çичĕ сехетсенче çит", – асăрхаттарать турă паман чирпе аптăранă çын. Дежурнăй сестра кирлĕ çĕре район пуçлăхĕ Дюма "отеца" вулама пуçласшăн тесе шăнкăравласа пĕлтерет.

Каçхи апат вăхăчĕ те иртет, чирлисем çывăрма палатăсене саланаççĕ. Çĕрле, вун пĕр сехет иртсен, Тешков выртакан палатăран баспа юрлакан çын сасси илтĕнсе каять. "Мы жертвою пали в борьбе роковой..." кисренсе тухаççĕ юрă сăмахĕсем. Тĕлĕрме пуçланă сестра дежурнăй врача чĕнсе килет. Шурă халатлисем палатăна кĕреççĕ. Пациент кравать çинче харлаттарса çывăрать-мĕн. Тумбочка çинче пушă "Экстра" кĕленчисем лараççĕ, урайĕнче кантрапа çыхнă сăран сумка выртать. "Акă епле вулать пирĕн чирли Дюма "отец" кĕнекисене",

– пĕççине шарт! çапать дежурнăй сестра.

Тепĕр эрнерен парти райкомĕн пленумĕ пулса иртет. Пĕрремĕш секретарь пулма унччен организациллĕ пай пуçлăхĕнче ĕçленĕ Сергей Петровича лартаççĕ. Шанчăкран тухнă Тешков ĕç шыраса ют облаçа çул тытать.

ВУН ИККĔ ÇАПСАН

Хальхи вăхăтра Комсомольски районĕн ял хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕнче ĕçлекен Киргизов Çĕнĕ çул уявне ытти çынсем пекех çемьере кĕтсе илет. Анчах тĕнчере тĕрлĕрен кĕнчеле тесе ахаль каламан çав. Хăй çамрăкрах чухне, "Заря" колхоз председателĕнче ĕçленĕ вăхăтра, Çĕнĕ çула республикăн ял хуçалăх министрĕн йышăну пӳлĕмĕнче кĕтсе илнĕ. Çав çул хуçалăхăн тĕп усадьби вырнаçнă Çĕнĕ Мăратра вăтам шкул туса пĕтерсе хута янă. Колхоз правленийĕ заказчик пулнă, укçа-тенкĕ чылай расхутланă. Строительство вĕçленнĕ хыççăн Министрсен Канашĕ çак укçана курттăммăн куçарса пама шантарнă.

Раштавăн 31-мĕшĕнче Георгий Михайловича телефонпа шăнкăравласа васкавлăн Шупашкара çитме хушаççĕ. Сехет çурăран тĕп хулана çитсе вăл ял хуçалăх министрĕ патне кĕрет.

Расхутсене саплаштарма укçи пур-мĕн те, анчах ăна Министрсен Канашĕн председателĕ Прокопьев çуралнă ялти шкула куçарса пама палăртнă. Леонид Прокопьевич ун пирки нимĕн те шарламасть-мĕн (тĕрĕс çын, хăйшĕн нихăçан та йĕркерен тухса нимĕн те туман). Çĕрле 12 сехетчен шарлама пултарать тесе укçа куçаракансем шикленсе тăраççĕ. Çур çĕр çитсе пырать. Çӳлтен нимĕнле хушу та çук. Вун икĕ сехет çитме вун пилĕк минут юлсан банкран "Заря" колхоз счечĕ çине пысăк укçа куçса выртать. Кремль куранчĕсем вун иккĕ çапма пуçласан пысăк ĕç тунипе хĕпĕртенĕ Киргизов йышăну пӳлĕмĕнчи сĕтел çинчи графинран пĕр стакан шыв ĕçсе ярать те машина çине ларса киле кайма çула тухать.

ВĂРМАР ЛАЙĂХ-И, ВĂРНАР ЛАЙĂХ-И?

Вăрмартан Вăрнара чукун çулпа Канаш урлă виçĕ сехетре çитме пулать. Парти райкомĕсен пĕрремĕш секретарĕсем пулса Вăрмарта Борцов, Вăнарта Емельянов ĕçлеççĕ.

Ирхине çичĕ сехетре Борцов Вăрнара шăнкăравлать. Секретарьсем кулленхи ĕç-пуç çинчен калаççа илеççĕ.

– Итле-ха, Толя, паян Чăвашрадиопа те Вăрнар терĕç, те Вăрмар терĕç, лайăх илтсе юлаймарăм, ăмăртура пĕрремĕш вырăна тухни çинчен пĕлтерчĕç, – чееленет Борцов.

– Ăмăртура пĕрремĕш вырăна тухнине пĕлтерчĕç пулсан, Вăрнар тенĕ ĕнтĕ радиопа, – шахвăртать Емельянов.

–Тепĕр темиçе кунран Емельянов Вăрмара шăнкăравлать. Паллах, шăл йĕрес тĕллевпе мар, кирлĕ ĕçпе. Çапах та ĕç пирки калаçса пĕтернĕ хыççăн шӳт тумасăр чăтаймасть.

– Итле-ха, Толя, "Коммунизм ялавĕ" хаçатăн паянхи ум статйинче Вăрмар районĕ çĕр ĕç культурине ӳстерес енĕпе япăх ĕçлет тенĕ. Вуларăн-и? – ыйтать вăл.

– Вуларăм. Анчах эсĕ йăнăшатăн. Хаçата тепĕр хут тытса пăх-ха. Вăрмар мар, Вăрнар районĕ тесе çырнă унта, – хуравлать Борцов.

ОТСТАВКĂНА ТУХАС УМĔН

Компартин Чăваш обкомĕн пĕрремĕш секретарĕнче ĕçленĕ чухне Прокопьев республикăра çитмен хуçалăх хăварман. Пĕррехинче Комсомольски районĕнчи Асанкассине тухса каять. Вăрман варринче ларакан 400 киллĕ яла пырса çитет те клуба кĕрет. Халăх – лăк тулли. Пухăва ертсе пыраканĕ тӳрех ăна сăмах парасшăн. "Апла мар-ха, малтан халăха итлер, кайран сăмахлама пулĕ унта", – тет Илья Павлович. Асанкасси çыннисем, кун пеккине хăнăхманскерсем, пĕр самант шăпăртах пулаççĕ. Унтан калаçма пуçлаççĕ. "Хырхĕрринчен Асанкассине çитме çул çук. Çав пĕтерет пире", – теççĕ.

Илья Павлович çулсем тăвас ĕçри йывăрлăхсем çинчен каласа тăмасть. "Шухăшлăпăр. Майне тупас тесе тăрăшăпăр". – тесе пĕлтерет.

Ун чухне асфальт çулсене хăçан тата ăçта тăвассине Мускав татса панă. Ун пек çулсене тĕп усадьбăсене çитиччен анчах хывнă. Асанкасси усадьба шутланмасть. Ялтан райцентра таврăннă чухне Прокопьев парти райкомĕн секретарьне ял Советне Хырхĕрринчен Асанкассине куçарма ыйтса республикăн Аслă Канашĕн Президиумне хут çырса яма хушать. Çакăн пек хут тепĕр эрнеренех Шупашкара çитсе те выртать. Шупашкартисем Мускава хут яраççĕ. Çур çултан ял Совечĕ Хырхĕрринчен Асанкассине куçать. Вара Хырхĕрринчен Асанкассине асфальт çул тума проектсем хатĕрлеме, çул пулмалли вырăнти вăрмана

касма пуҫлаҫҫӗ.

Утмӑлтан иртнӗ Прокопьев 1988 ҫулта отставкӑна тухать (ун чухне вӑл енӗпе йӗрке ҫирӗп пулнӑ, пуҫлӑх пуканӗ ҫинче никам та 65-70 ҫулччен ларайман). Вӑл пулӑшнипе хывма пуҫланӑ Хырхӗрри – Асанкасси асфальт ҫула 1989 ҫулта туса пӗтернӗ.

КАМӐН МӖН ШУХӐШ

Петӗр Хусанкай мухтанӑ Петӗр Эревет сӑвӑҫ пӗр вӑхӑт Комсомольски районӗнчи "Октябрь ялавӗ" хаҫат редакцийӗнче ӗҫлесе пурӑннӑ. Хӗллехи пӗр сивӗ кун хаҫат редакторӗ, партин Чулхулари шкулӗнче куҫӑмсӑр майпа юлашки ҫул вӗренекенскер, экзамен пама тухса кайнӑ. Унӑн ҫумӗ, Шупашкарти университет заочникӗ, иккӗмӗш эрне ӗнтӗ тӗп хулара наука гранитне кӑшланӑ. Яваплӑ секретарь журналист дипломне илес ӗмӗтпе Хусан урамӗсене такӑрлатма ӑсаннӑ. Редакцире ял хуҫалӑх пайӗн пуҫлӑхӗ Петӗр Эревет тата аслӑ корреспондент Володя Давыдов ҫеҫ юлнӑ.

– Ан шиклен, Петӗр! Корректор пулсан хаҫат тухать вӑл. Пирӗн акӑ корректор та пур. Иксӗмӗр те кунтах. Мӗн тери чаплӑ хаҫат кӑларӑпӑр пӗрле, – тусне хавхалантарать Володя.

Акӑ вӗсем литература страници хатӗрлеме пуҫлаҫҫӗ. Эревет, маларах Тамара ятлӑ хӗре ӑнӑҫсӑр юратса пӑрахнӑскер, ӑна халалланӑ сӑвва страница варрине лартать.

"Тамара, Тамара, Тамара...
Чӗнсен те тухмарӗ,
Мана ӑнланмарӗ,
Юратӑвӑн тарӑн тымарӗ
Шала кайнине те туймарӗ",

– тесе вӗҫлет сӑввине.

Сӗм ҫӗрлеччен муталанса хаҫата аванах кӑларса яраҫҫӗ. Ҫур ҫӗр ҫитеспе кӑна пушаннӑскерсем, тепӗр кун ӗҫе вун пӗр сехете анчах пыраҫҫӗ.

– Сире иртенпех райкомра шыраҫҫӗ. Халех тухса чупӑр, – пӗлтерет хыпӑнса ӳкнӗ техничка.

Тамарӑна халалланӑ сӑвӑ пирки чӗннӗ-мӗн шереметсене ҫӳллӗ ҫурта. "Мӗнле тарӑн тымар вӑл? Шалалла ӑҫталла каять? Ӑҫта ҫитсен чарӑнать?" – тӗпчет журналистсене ҫӳллӗ ҫуртри пысӑках мар пуҫлӑх.

Лешсем "тарӑн тымар" пирки нимӗнех те ӑнлантарса

параймаççĕ. “Ф-у-у, шуйттан! Теменĕн тем шухăш, кукшан та çав шухăш”, – лач сурать Давыдов урама тухсанах. Петĕр нимĕн те чĕнмест.

Тепĕр кунне, каç енне сулăнсан, хаçата пичетлеме пуçличчен вуласа алă пусма редакцие райкомăн пропаганда пайĕн пуçлăхĕ çитсе кĕрет.

ÇĂХАВ ÇЫРНИН УССИ ÇУК

Муркаш районĕнче ун çинчен тĕрлĕрен калаçатчĕç. Ăна мухтаканни те, хурлаканни те пурччĕ. Çынни тахçанах вилнĕ те, ан тив, чăн ятне каламăпăр, Иван Иванч тейĕпĕр. Çав Иван Иванч районти “Çĕнтерӳ ялавĕ” хаçатра редактор çумĕ пулса ĕçлетчĕ. Ĕçлеме начарах ĕçлемен пуль те, анчах та унăн пĕр пысăк çитменлĕхĕ пурччĕ: çăхавсем çырма питĕ юрататчĕ. Хăйĕн пуçлăхне – редактора – уйрăмах хытă тăпăлтаратчĕ.

Иван Иванчпа ĕçлеме май çуккипе Муркашра виçĕ-тăватă çулта икĕ редактор улшăнчĕ.

Редактор туса Муркаша ытти районсенчен çынсем яма пуçларĕç. Малтанах вĕри пукан çине Денис Гордеевăн (чăвашсен хальхи паллă çыравçи) лармалла пулчĕ. Иван Иванч ун пирки те çăхав хыççăн çăхав ăсатма пуçларĕ. Факчĕсем вара пӳрнерен ĕмсе кăларнăскерсем. Денис Викторовича лайăх ĕçленине кура Шупашкара Чăваш патшалăх кĕнеке издательствин директорне лартрĕç.

Çакăн хыççăн Муркашра пĕрин хыççăн тепри Виталий Шемекеевпа (талантлă сăвăç) Анатолий Хованский (пултаруллă публицист) редакторта ĕçлерĕç. Вĕсем çинчен те çăхавсем ăсатсах тăчĕ Иван Иванч, анчах нимĕнле сиен те тăваймарĕ.

Тепĕртакран Хованские Вăрмара куçараççĕ. Пĕлекенсем каланă тăрăх, Иван Иванч çакăн хыççăнах парти райкомне кайрĕ тет те Владимир Федорович Григорьева (пĕрремĕш секретарь) çапла каларĕ тет: “Урăх шалăп çыраccăм çук. Хута усăсăр варалам мар. Редактора хамăр район çыннинех лартăр”, – терĕ тет.

Çăхав çырма пăрахнă Иван Иванч çакăн хыççăн. Муркаш çыннисем – Герман Андреевич Андреевпа Лев Михайлович Шапошников “Çĕнтерӳ ялавне” темиçе çул çӳлте тытса пычĕç. Герман Андреевич редакципе типографин икĕ хутлă çуртне купалаттарса ĕçе ячĕ.

1962 çулта Никита Хрущев республикăсемпе облаçсенче тата крайсенче районсене пĕрлештерсе пысăклатрĕ. Патăрьел районĕ те кĕпĕрне пек пысăкланса кайрĕ. Патăрьелсĕр пуçне тата унччен Елчĕк, Шăмăршă, Комсомольски районĕсенче шутланнă ялсем те кĕретчĕç. Пысăкланнă районти “Авангард” хаçата Елчĕксем те, Шăмăршăсем те, Комсомольскисем те илсе тăма тытăнчĕç.

Хаçачĕн тиражĕ ӳсрĕ, анчах ялсене тухса çӳреме журналистсен йышĕ те, машина та çук. Территорисенче ялкорсен посчĕсене те тӳрех йĕркелесе яма йывăр.

Çапла вара Елчĕк çывăхĕнчи Аслă тата Кĕçĕн Таяпа ялĕсенче “Авангарда” çырăнса илекенсем пĕр уйăх, икĕ уйăх кĕтрĕç тет хаçатра хăйсен тăрăхĕнчи ĕç-пуç çинчен çырасса. Кĕтсе илеймерĕç тет. “Ку “Авангард” начар карта та тăмарĕ”, – терĕç тет вара.

Пирĕн çинчен нимĕн те çырмасть”, – терĕ тет Аслă Таяпари пĕр шур сухал.

Çакăн хыççăн та Елчĕксем пирки нимĕнех те пĕлтерейменн “Авангард”. 1965 çул пуçламăшĕнче пайласа районсем туса хунă, Елчĕкре “Колхоз ялавĕ” хаçат тухса тăма пуçланă.

СЕКРЕТАРЬСЕНЕ ШĂШИСЕМ ТЕ ИТЛЕНĔ

Парти обкомĕн кадрсемпе ĕçлекен секторĕн пуçлăхĕ Степанов тĕк тăнă çĕртех хуйăха каять. Хуйхăрмалли сăлтавĕ пулнă çав. Обком номенклатурине кĕрекен çынсен “личнăй делисене” упракан пӳлĕме шăшисем иленнĕ, кунта урăх апат тупайман пирки ĕçлĕ хутсене кăшланă. Шăшисене наркăмăшпа пĕтерме хăтланни те кăлăхах пулнă. Пĕчĕк “кайăксем” пырса çӳрени секторта ĕçлекен хĕрсене уйрăмах сехĕрлентернĕ.

Пĕррехинче, тăр кăнтăрлах, шкап айĕнчен пĕр ватă шăши йăпăртатса тухнă та сĕтел хушшинче тăрăшсах ĕçлесе ларакан хĕр умне пырса кайри урисем çине тăнă. Хăраса ӳкнипе çӳçне-пуçне вирелле çĕклесе хĕр коридора чупса тухнă, алăка уçах хăварнă. Анлă коридорпа обком секретарĕ Ковалев утса пынă. Вирхĕнсе тухнă хĕр ăна чутах ураран ӳкермен.

– Кабинетра шăши пур! – кăшкăрса янă вăл.

– Парăр, ăна, выçăскерне, манăн личнăй делăна! Кăшлатăр, каяннăй! – шӳтлесе хунă Геннадий Павлович.

Те илтсе ăнланнă çакна ватă шăши, те ăнланман, анчах та çав самантран пуçласа вăл та, унăн ытти тăванĕсем те кадрсен секторĕн пӳлĕмне кĕрсе çӳреме пăрахнă.

КĂМПАНА КАЙСАН

Шупашкарти "Химпром" пĕрлешĕвĕн директорĕ Леонид Шевницын пушă вăхăтра кăмпана çӳреме юратнă. Вăл – Вятка ырăсĕ, ялтан. Шевницын хыр кăмпи татма анчах çӳренĕ. Вăл кашни йывăç кутĕнчех шăтса тухмасть. Ăна çурла уйăхĕн вĕçĕнче тата авăн пуçламăшĕнче çамрăк хырлăхра шырамалла. Ун пек вăрмансем Атăл леш енче питĕ сахал. Леонид Сергеевич шоферĕ Володя, Комсомольски районĕнчи Асанкасси ачи, ăна кăмпа татма Кĕтне хĕрринчи вăрмансене çитме сĕннĕ. Кунта иккĕшĕ кăна пĕлекен кăмпаллă вырăнсем нумай пулнă. Пĕррехинче Волоя Леонид Сергеевича Асанкассине илсе пырать. Ирех вăрмана тухса утаççĕ, тӳрех кăмпа вырăнне лекеççĕ. Хăть те çавапа çул! Ун пек чухне пĕр-пĕрин çинчен те манса каятăн. Леонид Сергеевич икĕ карçинккипе рюкзакне тултарать. Пăхать – Володя çук. Кăшкăрать – никам та сас памасть. Яла таврăнма шутлать, каялла çаврăнса утать. Утсан-утсан Асанкассине мар, Канаш районĕнчи Шелттеме пырса тухать. Ял çыннисем ăна Сызрань – Çĕрпӳ аслă çула кăтартса яраççĕ. Икĕ карçинкка йăтнă, рюкзак çакнă Шевницын Çĕнĕ Шупашкара çитет. Пуçлăха вăрманта çухатнă Володя Леонид Сергеевича вăрмантан тухасса тепĕр ирччченех кĕтет. Кĕтсе илеймест, телефонпа Çĕнĕ Шупашкара шăнкăравлать. Ăна Шевницынпа çыхăнтараççĕ. "Володя, вăрманта аташтарса хăварнăшăн сана выговор паратăп, кăмпаллă вырăна илсе пынăшăн – пысăк преми", – илтĕнет аякран пуçлăхăн хаваслă сасси.

"СЫЛТĂМАЛЛА ПĂРĂН, СУЛАХАЯЛЛА ТЫТ"

Ку ĕç иртнĕ ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсенче пулса иртнĕ. Хĕллехи пĕр сивĕ кун КПСС обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Ислюков района партконференци ирттерме икĕ кунлăха командировкăна пырса çитнĕ. Ыран конференцире тухса каласмалла-çке. Ăна валли цифрăсемпе фактсем кирлĕ. Семен Матвеевич пулăшуçисене шансах кайман, лару-тăрăва хăй тĕпченĕ.

Акă вăл райкомăн виççĕмĕш секретарĕпе Матрена

Сидоровнăпа çуна çине ларать те 17 коммуниста пĕрлештерсе тăракан парторганизаци ĕçĕпе паллашма "Хĕрлĕ клевер" колхоза тухса каять. Ямшăкĕ, тинтерех çеç ĕçлеме пуçланăскер, районти çулсене пĕлсех каймасть-мĕн те, Матрена Сидоровна хуçалăха çывăх çулпах илсе çитерме пулать. Çул тăршшĕпех ямшăка: "Сулахаялла тыт, сылтăмалла пăрăн", – тесе пырать.

Кăнтăрла тĕлнелле яла пырса кĕреççĕ. Анчах та ялĕ малтан палăртнă Упаçырми мар-мĕн, Вăкăрçырми пулать каять, колхозĕ те "Хĕрлĕ клевер" мар, "Хĕрлĕ сухаç". Инкеке, колхозĕнче парторганизаци те çук.

Ислюков хăй кăмăлсăрланнине палăртмасть. Хуçалăх ертӳçипе тĕл пулать, активпа калаçать. Виçĕ çын партие кĕме кăмăл тăвать. Семен Матвеевич фермăсенче пулать, тимĕрçĕ лаççине, шкулпа клуба çитсе курать. Каçхине ямшăк Ислюковпа Матрена Сидоровнăна райцентра илсе çитерет.

Тепĕр кун конференци йĕркеллĕ иртет. Семен Матвеевич калаçнă чухне залра шăна вĕçни те илтĕнсе тăрать. Райкомра, райĕçтăвкомра, ытти кантурсенче ĕçлекен кашни çыннăн районти çулсене кăна мар, сукмаксене те пĕлмелле", – тет обком секретарĕ. Çак сăмахсем хыççăн конференцие хутшăннисем тăвăллăн алă çупса яраççĕ.

Конференци райкомăн виççĕмĕш секретарĕ пулма Матрена Сидоровнăна мар, ял хуçалăх управленийĕн агрономне Серафима Сергеевнăна суйлать.

ЁНЕР ПУÇЛĂХРА САРĂ ПАВĂЛЧЧĔ, ПАЯН – ХУРА МАКÇĂМ

Партин Çĕрпӳ райкомĕн пленумĕ пырать. Организациллĕ ыйту пăхса тухаççĕ. Николаева урăх ĕçе куçнă май парти райкомĕн пĕрремĕш секретарĕн ĕçĕнчен хăтарма йышăнчĕç. Павел Николаевич – сап-сарă сăн-питлĕ çын.

Çĕрпӳ райкомĕн пĕрремĕш секретарьне суйлама обком представителĕ йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен министртра ĕçлекен Коротков кандидатурине сĕнчĕ. Пленум ăна пĕр сасăллă пулса парти райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулма суйларĕ.

Тăхтав вăхăтĕнче Виçикасси, Çырмапуç, Янтуш, Туçи ялĕсенчен килнĕ райком членĕсем пуçтарăннă та калаçса тăраççĕ:

– Сарă Павăла Хура Макçăмпа улăштартăмăр. Пурнăç мĕнле пулĕ-ши? – сăмах хушать пĕри.

– Кулянмалли çук. Хура Макçăм Сарă Павăлтан кая пулмĕ-ха, – тет тепри.

Вĕсем калани чăна тухрĕ. Николаевпа Коротков пенсие тухсан та Шупашкара куçса килмерĕç. Вĕсем халĕ те Çĕрпӳре пурăнаççĕ, хулапа районăн чăн-чăн патриочĕсем.

ЛЕРМОНТОВ ТАТА СУНАР ЙЫТТИСЕМ

1962 çулта Никита Хрущев республикăсемпе облаçсенче районсен шутне чакарчĕ, компарти системинче улшăнусем турĕ. Комсомольски районне пĕтернĕ май Н.Г.Лермонтова Йĕпреç промышленноç районне куçарчĕç, райкомăн пĕрремĕш секретарьне суйларĕç. Лермонтов пурăнма Йĕпреçе куçрĕ, унăн Комсомольскинчи хваттерне кунти Культура çурчĕн пуçлăхĕ Гоголев йышăнчĕ.

Комсомольскинче пурăннă чухне Лермонтов хăйĕн çемйине хуларах хăварнă. Нимĕнрен ытла сунара юрататканскер, хăйĕнпе пĕрле вăл кунта сунар йыттисем анчах илсе килнĕ. Пилĕк стеналлă йывăç çуртăн пĕр пӳлĕмĕнче хăй пурăннă, тепринче вĕшле йытăсем усранă.

Секретарьтен юлнă хваттере куçнă хыççăн икĕ эрне иртсен Гоголев Комсомольскинчи чайнăя пырса кĕнĕ, пĕр стакан шурă эрех тултарса пама ыйтнă.

Чайнăйра вунă çул ĕçлесе те Гоголев хăйĕн патĕнче эрех ĕçнине курман буфетчица шалт! тĕлĕнсе кайнă.

– Ан тĕлĕн, Фрося, паян мана ĕçсен те юрать. Лермонтов йыттисенчен юлнă каяша пĕтĕмпех тасатса кăларас, шăршă-марша сĕвĕртес тесе икĕ эрне ĕçлерĕм. Халĕ хваттер çĕнĕ пекех. Тап-таса та çап-çутă. Хваттере çуни çакă пултăр, – тенĕ те Иван Федорович стаканри эрехе янк! янă.

АЧА ПĂХМА КАЙСАН...

Комсомольскинче “Сельхозтехника” пĕрлешĕвĕн ертӳçинче тата патшалăх хăрушсăрлăх техникин инженерĕнче 30 çула яхăн ĕçлесе пенсие тухнă Арсентий Артемьевич Лавров килте ахаль ларса аптăраса çитет. Пĕтĕм пурнăçне техника таврашĕнче ирттернĕскерĕн пулă тытса Кĕтне хĕрринче ларма чунĕ туртмасть, кăмпа татма çӳресси те илĕртмест. Çур çулта

килти библиотекинчи кӗнекисене тепӗр хут вуласа тухнӑ хыҫҫӑн Лаврова канӑҫ пурнӑҫ тата та йӑлӑхтарса ҫитерет. Кӗтмен ҫӗртен ывӑлӗ Шупашкартан телефонпа шӑнкӑравласа хулана ача пӑхма чӗнсен ҫеҫ чӗри лӑштах пулать.

Хулара ывӑлӗпе кинӗ тата тӑваттӑ тултарнӑ мӑнукӗ лайӑх кӗтсе илеҫҫӗ. Юсав ӗҫӗсем пынӑ май ача садне виҫ эрнелӗхе хупнӑ мӗн-те, мӑнукне килте пӗччен хӑварма ҫук: ашшӗпе амӑшӗ ӗҫре. Пӗр кун иртет, иккӗ, пӗр эрне... Лавров майӗпен ача пӑхма хӑнӑхса ҫитет. Иккӗшӗ пӗрле выляҫҫӗ, апат ҫиеҫҫӗ, ҫывӑраҫҫӗ...

Иккӗмӗш эрнене кайсан, ҫуллахи пӗр лӑпкӑ кун, кӑнтӑрлахи апат умӗн виҫӗ черкке эрех тутанса пӑхнӑ Арсентий Артемьевич кресло ҫине ларса тӗлӗрсе каять. Мӑнукӗ: “Деда, ищи меня!” – тени те унӑн хӑлхине кӗмест.

Тем самантран вӑранса каять вӑл. Пӑхать, хваттерӗнче никам та ҫук. Шырать мӑнукне – тупаймасть. Балкон алӑкӗ уҫӑ мӗн те, унта пырса аялалла пӑхать. Иртен пуҫласа каҫчен сак ҫинче ларакан карчӑксемсӗр пуҫне урамра пӗр чун та курӑнмасть. Тӑваттӑмӗш хутран аяла анса Лавров карчӑксенчен: “Балкон ҫинчен ача ӳкмерӗ-и, ӑна пульницӑна илсе каймарӗҫ-и?” – тесе ыйтать. Лешсем: “Ӳкмерӗ, пульницӑна никама та илсе каймарӗҫ”, – теҫҫӗ. Лавров шырав ӗҫне тепӗр хут пикенет. Икӗ сехет ытла чӗрине ыраттарса, тар юхтарса ширанӑ хыҫҫӑн вӑл ывӑлӗпе кинӗ ҫывӑракан пӳлӗмри пысӑк ҫитӗпе витнӗ сӗтел айӗнчен телевизор курупкине сӗтӗрсе кӑларать. Аслашшӗ курупкӑна уҫиччен шалтан мӑнукӗн пуҫӗ курӑнса каять, кайран хӑй те сиксе тухать. Ыйхӑллӑ куҫӗсене сӑтӑркаласа: “Долго я спал, дедуля”, – тесе хурать. Лавров урайне лаках ларать те, нихҫан куҫҫуль кӑларманскер, йӗрсе ярать.

Ҫав каҫах, ывӑлӗпе кинӗ ӗҫрен таврӑнсан, Арсентий Артемьевич Чӗмпӗре каякан юлашки автобус ҫине ларса Комсомольскине таврӑнать.

ПИКШИХРЕ ТЕ ПУЛМАН, ПУКӐРТАНА ТА ПЫМАН

Вунӑ ҫул ытла пӗрле ӗҫленӗ хыҫҫӑн партин Канаш райкомӗн пӗрремӗш секретарӗ Роштов хӑйне пропагандӑпа агитаци пайӗн пуҫлӑхӗ Мулдиеров вӗҫӗмсӗр улталанине сисет. Эрне пуҫламӑшӗнче Мулдиеров “Мотор” колхоза

пропагандистсен семинарӗ ирттерме каятӑп тесе тухса вӗҫтерет те кӗҫнерни кунчченех райкома ура та ярса пусмасть. Роштов "Мотор" колхозӑн партком секретарӗпе калаҫнӑ хыҫҫӑн пропагандӑпа агитаци пайӗн пуҫлӑхӗ Асхвапа Вырӑскас Пикшик таврашне пӗлтӗртенпех пырса курманнине пӗлет. Пӗлет, анчах нимех те шарламасть-ха.

Темиҫе кун иртсен Мулдиеров Пукӑртан ялне ҫыру тӗрӗслеме тухса каясси ҫинчен пӗлтерет. Виҫӗ кун ҫухалса пурӑнать вӑл. Ӗҫе пырсанах Роштова хӑй ҫырӑва еплерех тӗрӗсленине евитлет. Роштов Татмӑш ял Совечӗн пуҫлӑхӗпе телефонпа ҫыхӑнать, Мулдиеров Пукӑртанра пулнипе пулманни пирки ыйтса тӗпчет.

– Пукӑртанра виҫӗ кун кашни киле кӗрсе выльӑх шутне ҫырса ҫӳрерӗм. Курман унта ӑна. Мулдиеров ял Советне кӗрсе курманни виҫҫӗмӗш ҫул ӗнтӗ, – тет председатель.

Роштов ҫилленсе шӑлне ҫыртать, анчах каллех нимӗн те шарламасть.

Уйӑх вӗҫнелле Мулдиеров пӗрремӗш секретарь кабинетне кӗрсе хӑй ыран Мичурин ячӗпе хисепленекен колхоза тухса каяссине пӗлтерет, машина ыйтать.

Пай пуҫлӑхне ӗненме пӑрахнӑ Роштов ирхине Мичурин ячӗллӗ колхозӑн тӗп усадьбине хӑй тухса каять, райкома ҫӗрле кӑна таврӑнать, тепӗр ирхине Мулдиеров ларса кайнӑ автомашина шоферне хӑйӗн кабинетне чӗнсе кӗртет. "Нимӗнле колхозра та пулман эпир, вӑрманти утарсенче ҫӳрерӗмӗр ӗнер. Урапа шӑтрӗ, запаскӑна лартма тиврӗ", – каласа парать водитель.

Шофер тухса кайсанах кабинета Мулдиеров пырса кӗрет. Мичурин ячӗллӗ колхоза кайса килни ҫинчен евитлеме пуҫлать.

– Итле-ха, – ҫур сӑмахранах пӳлсе хурать ӑна Роштов, – эсӗ лекцисемпе докладсенче районти, ҫӗр-шыври, тӗнчери лару-тӑру пирки пӗр вӗҫӗмсӗр суйнине эпӗ вунӑ ҫул чӑтрӑм, хама улталанине вара чӑтма пултараймастӑп, хӑвна ӗҫрен хӑтарма бюро ячӗпе халех заявлени ҫыр.

Ҫав кунах Мулдиерова райкомран аллинчен ӗҫ кӗнеки тыттарсах кӑларса яраҫҫӗ.

пирӗн районта партире тӑман ҫынсем те ҫырӑнса илеҫҫӗ. Акӑ йӑла ыйтӑвӗсене тивӗҫтерекен комбинатри Шалин атӑҫӑ “Коммуниста” виҫҫӗмӗш ҫул ҫырӑнса илет ӗнтӗ”, – хыпарлать Игонин.

Ку факт Гайдара калама ҫук кӑсӑклантарса ярать. Вӑл Игонинран ҫавӑн пек ҫынсенчен пӗринпе паллаштарма ыйтать.

Шалин Гайдарпа Игонина ӗҫ вырӑнӗнче кӗтсе илет. Алӑ парса паллашнӑ хыҫҫӑнах Гайдар атӑҫӑран “Коммунист” журнал ӑна мӗншӗн килӗшнине тӗпчеме пуҫлать. “Егор Тимурович, сире суймасӑрах калатӑп: эпӗ шкула мӗн пурӗ те икӗ ҫул ҫеҫ ҫӳренӗ, халиччен журнал мар, пӳрне хулӑнӑш кӗнеке те вуласа курман. Манӑн пӗр пӗчӗк ҫылӑх пур. Ирхине ҫур пулӑштух ӗҫмесӗр ӗҫе пуҫӑнаймастӑп. Эрех ӗҫнӗ чухне тӑварланӑ пулӑ ҫиме юрататӑп. Сирӗн журнала пулӑ чӗркеме ҫырӑнса илетӗп. Йӳнӗ вӑл, ҫулталӑка виҫӗ тенкӗ те утмӑл пус анчах. Хучӗ яка, лайӑх”, – ӑнлантарать Шалин.

Гайдар нимӗн те чӗнмест. Аванмарланса кайнӑ Игонинпа иккӗшӗ васкасах мастерскойран тухса шӑвӑнаҫҫӗ.

АНТОНИЙ МЕДВЕДЕВӐН ҪУТӐ ӖМӖЧӖ

Елчӗк хутлӑхӗнчи Вырӑскассинче ҫуралса ӳснӗ Медведев Комсомольски районне учительте ӗҫлеме килнӗ. Вӑрҫӑра пулнӑскере, чылаях вӗреннӗскере, япшар чӗлхе-ҫӑварлӑскере райкомра та асӑрханӑ. Часах ӑна партин МТС (машинӑпа трактор станцийӗ) енӗпе ӗҫлекен секретарьне суйлаҫҫӗ, Асанкассинчи Ульянов ячӗллӗ колхоза отчетпа суйлав пухӑвӗ ирттерме яраҫҫӗ. Пухӑва ҫынсем хаваспах пуҫтарӑнаҫҫӗ, вӑхӑтра пуҫлаҫҫӗ. Колхоз председателӗ Якимов хӑйӗн докладне тӑсса ямасть, хӑвӑрт вӗҫлет. Ара, ӳсӗмсем ҫинчен питех каламалли ҫук, ҫитменлӗхсем ҫинчен калас килмест.

Трибуна умне райком секретарӗ Медведев тухса тӑрать. “Хисеплӗ ял-йыш, хаклӑ юлташсем, чӑнах та, сирӗн ҫӗрсенче сӑрт ҫамкисем нумай. Вӗсенче садсем ӗрчетме меллӗ. Ҫимӗҫ йывӑҫҫисем лартсан ҫӑтмахри пек пурӑнмалла сирӗн”, – пуҫласа ярать хӑйӗн сӑмахне райком секретарӗ. Секретарь шӑплансанах ҫынсем калаҫма чарӑнас та председатель суйлас ыйту ҫине куҫас теҫҫӗ.

Чи малтанах Яков Таборкин колхозник сӑмах илет.

"Партбюро ларăвĕнче колхоз председательне суйламашкăн хальхинче те Якимова сĕнме йышăнтăмăр. Халĕ, Медведев юлташа итленĕ хыççăн, манăн шухăш улшăнчĕ. Колхоз председательне ăна хăйне суйласан лайăхрах пулмĕ-ши тетĕп. Пĕрле чĕртер сăрт çамкисенче садсем, пĕрле пурăнар çăтмахри пахчасенче", – пĕлтерет халăха Таборкин активист. Пухури халăх пĕр çын пек пулса алă çупма тытăнать. Антоний Осиповича председателе суйласа лартаççĕ. Колхозниксен пухăвĕн йышăнăвне райкомра çирĕплетеççĕ. Çакăн хыççăн 10 çул ытла ĕçлерĕ колхоз ертӳçинче Антоний Медведев. Кайран хăй кăмăллакан учитель ĕçне куçрĕ, шкул директорĕ те пулчĕ. Сăрт çамкисенче садсем ӳссе лараймарĕç. Ун вырăнне хăмла пахчи сарăлчĕ, утарсем пысăкланчĕç, пахча çимĕç ытларах туса илме пуçларĕç, фермăсем çĕнелчĕç. Медведев хăнана кайсан хăй çуралнă ялта сасартăк вилсе кайрĕ. Ӳтне Асанкассине илсе килчĕç, ялти масара пытарчĕç.

ХУРА ПИЧКЕРИ ХĔРЛĔ ТАВАР

Тăвай çыннисем хăнасене питĕ тараватъ. Район пуçлăхĕсем пирки те çавнах каламалла. Вĕсем Шупашкартан е ытти çĕртен килекен çынна кабинетран чей ĕçтермесĕр кăларса ямаççĕ. Чей ĕçтернипе кăна çырлахмаççĕ, тепĕр чухне деликатес текен апатсене те тутантарса пăхтараççĕ.

Терентьев партин Тăвай райкомĕн пĕрремĕш секретарĕнче ĕçленĕ чухне пулнăччĕ-ха ку. Хăçан района каятăн, кашнинчех пуçлăхсем хĕрлĕ пулăпа хăналаççĕ. Райком секретарĕ те, райĕçтăвком председателĕ те, ял хуçалăх управленийĕн начальникĕ те, райпо пуçлăхĕ те – пурте хĕрлĕ пулă тутанса пăхма хистеççĕ. Ирĕксĕрех вара Тăвайсем райцентр çывăхĕнчи Тăм çырминче хĕрлĕ пулă ĕрчетме тытăнман пулĕ-çке тесе шутлаттăмăр.

Çук, апла мар иккен. Тăм çырминче хĕрлĕ пулă мар, ыраш пăтри те курăнасшăнах мар. Хĕрлĕ пулăн историйĕ вара çапла.

Пĕррехинче Михаил Семеновича Тăвай райповĕн пуçлăхĕ шăнкăравласа хăй патне ĕçе пыма ыйтать. Терентьев райпо хуçи патне тӳрех вĕçтерет. Лешĕ ăна гастроном складне илсе каять те тăварланă килька пички патне илсе пырать. Хура пичке хăми çине "Кильки пряного посола" тесе çырса хунă. Пуçлăх пичкене уçрĕ те – кунта килька мар, тем мăнтăраш

хĕрлĕ пулăсем. Океанри плавбаза шуликĕсем хăйсем валли хатĕрленĕ пуль те ку "кучченеçе", анчах деликатес вĕсен çăварне кĕреймен, Тăвайĕнчи гастронома килсе выртма тӳр килнĕ ун. Чылаях пысăк пичкере пĕр центнер ытла хĕрлĕ пулă. Михаил Семенович çакна килька хакĕпе (килограмĕ 30 пус тӳлет те), вăтăр кило райкома, ыттисене райĕçтăвкомпа ял хуçалăх управленине ăсаттарать. Райпо валли те чылаях хăвараççĕ. Çапла вара çур çул ытла хăнасене хĕрлĕ пулăпа хăналаççĕ.

ÇУХАЛНĂ ЧĔН ЙĔВЕН

Комсомольски районĕнчи Тăманлă Выçлири Сталин тата Çĕнĕ Мăратри Жданов ячĕллĕ колхозсене пĕрлештерсе пысăк хуçалăх туса хунине ял çыннисем ас тăваççĕ-ха. Председатель пулма Николай Квасова суйланă. Николай Степанович çемйипе Çĕнĕ Мăрата куçса килнĕ, çак ялта çурт лартнă.

Юхăннă хуçалăха ура çине тăратас тĕллевпе вăл ĕç дисциплинине çирĕплетнĕ, минимум тултарман колхозниксене хытă хĕстернĕ. Лешсем нумай кĕттерсе тăман, çуллахи пĕр лăпкă каç Квасов лупасĕ çинче "хĕрлĕ автан" ташлаттарнă.

Николай Степанович хăраса ӳкмен, "тилхепене" пушатма шутламан. Кӳреннĕ çынсем те тĕлĕрмен, çак ĕç пулса иртнĕ хыççăн çур çултан Квасовăн çĕнĕ лупасне виçĕ тĕлтен вут хыпса илнĕ. Яла килнĕ следовательсем нимĕн те тупса палăртайман.

Çак ĕç пулса иртнĕ хыççăн тепĕр эрнерен яла парти райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Николаев персе çитнĕ, пуху ирттернĕ. Пухура колхоз демократийĕпе ĕç дисциплини пирки ыйту пăхса тухнă.

Председатель доклачĕ хыççăн пĕр колхозник лаша витинчен ĕнер-виçĕм кун чĕн йĕвен çухални пирки сăмах пуçарнă. Ку сăмаха ыттисем те ярса илнĕ. Павел Николаевич сăмах чĕнмесĕр пĕр сехет çурра яхăн итлесе ларнă, трибуна умне çур çĕр çитеспе анчах тухнă.

– Чĕн йĕвен проблемине эсир паян пухура татса патăр тесе шутлăпăр. Сирĕн хуçалăхра тата тепĕр проблема пур. Вăл – колхоз председателĕн лупасне икĕ хутчен вут тĕртсе çунтарни. Ун сăлтавне пушар хуралĕн инспекцийĕ лайăх тĕпчесе пĕлнĕ. Урăх сăлтавсем çук. Кам пĕлет, Николай

Степанович çурчĕ çинче малашне те "хĕрлĕ автан" ташлаттарас текенсем тупăнĕç. Анчах мĕнле пулсан та, председатель çурчĕ икĕ-виçĕ уйăхра тата та хӳхĕмрех çĕкленĕ, çакă пĕтĕмпех колхоз шучĕпе (сирĕн шутпа) пулса пырĕ. Йĕвен пирки пăшăрханатăр пулсан çакăн пирки те шухăшлăр, – çапла пĕтĕмлетнĕ хăйĕн кĕске сăмахне райком секретарĕ.

Пуху иртекен зала сасартăк тупăкри пек шăплăх пусса илнĕ. Тепĕр самантран çынсем пĕр-пĕрне пӳлсе калаçма тытăннă:

– Çур çĕр иртнĕ, киле каймалла! Паян ирех ĕçе тухмалла, мĕн палкаса лармалли пур! Хупар пухăва! – унтан та кунтан илтĕннĕ сасăсем.

Пуху хупăннă. Çакăн хыççăн Çĕнĕ Мăратра вунă çул ытла пĕр пушар та тухман.

ИККĔН ПĔР КĂМАКА УМĔНЧЕ

Канаш районĕнчи Крупская ячĕллĕ колхоз председательне Иванова парти райкомĕн секретарĕ пулма суйлаççĕ. Райкомра ĕçлеме тытăнна-тытăнманах Иванов Малти Ăнтавăша партпуху ирттерме тухса каять, çитсенех машинине каялла Канаша кăларса ярать, каçхине тăхăр сехетре килсе илме хушать.

Кăнтăрла иртсен кутсăр-пуççăр çил-тăман алхасма пуçлать, çулсене пĕтĕмпех хупласа хурать. Ыр çын йыттине те хапхаран кăларман çанталăкра партпухăва секретарь те, коммунистсем те пымаççĕ. Бухгалтерсемпе кассирсем ĕç пĕтерсе пилĕк сехетре правленирен тухса каяççĕ, Иванов сивĕ те кичем пӳлĕмре пĕччен тăрса юлать.

Сакăр сехетре ăна илме тухнă машина çул çук пирки каялла Канаша таврăнни çинчен телефонпа пĕлтереççĕ. Иванов аптраса ӳкмест, сарайне тухса пысăк çĕклем утă илсе кĕрет, кăмака хутса ярать, вĕри кĕл айне çĕр улми хурать.

Кăвара турчкапа пăтратнă вăхăтра правлени алăкĕнчен юрпа хупланнă çи-пуçлă çамрăк çын тайкаланса пырса кĕрет. Ку этем ӳсĕр хулиган мар-ши тесе Иванов кăштах шикленнĕ пек пулать те лешĕ лайăххах калаçма пуçласан хăрани тӳрех иртсе каять. Тин çеç килсе кĕнĕ çамрăк Иванова каçхи хуралçă тесе шутланă-мĕн.

– Хуралçă мар-ха эпĕ, райком секретарĕ, – хуравлать

Виссарион Федорович.

– Ара, эпӗ те комсомол райкомӗн ҫӗнӗ секретарӗ-ҫкеха. Юрий Петрович. Илтмен-и вара? Паян шкулта, фермӑсенче пултӑм. Каҫхине мана илме машина килмеллеччӗ. Ӑҫта унта! Ҫавӑрттарать кӑна ав, – хушса хурать ҫамрӑк ҫын.

– Лар, Петров. Ҫӗр улми пиҫрӗ. Тӑвар та пур. Аптрамастпӑр, – калаҫӑва вӗҫлет Иванов. Ивановпа Петров кӗл айӗнче пиҫнӗ кӗрпеклӗ ҫӗр улмине тӑраниччен ҫиеҫҫӗ те ӑшӑ пӳртри сӗтелсем ҫине ҫиелти тум-тирӗсене сарса, ҫӗлӗкӗсене пуҫ айне хурса ҫывӑрма выртаҫҫӗ.

"ЭП ХАРИС БАНДИТ МАР, ХАРИС ХАЙРУЛЛОВ!"

Шӑмӑршӑ райӗҫтӑвкомӗн председателӗ Калаков комисси членӗсемпе пӗрле ҫур акине мӗнле хатӗрленнине тӗрӗслеме Палтиелне пырса ҫитет. Калаков – тутар, вырӑсла калаҫнӑ чухне унӑн акцент тени вӑйлӑ палӑрать. Акӑ комисси членӗсемпе колхоз председателӗсем улӑм витнӗ кӗлет алӑкӗнчен кӗпӗрленсе кӗреҫҫӗ. Кӗлет тӑрри шӑтнӑ-мӗн те, пӳлмери вӑрлӑх шыв лекнипе самаях пӑсӑлнӑ. "Мӗн хӑтланатӑр эсир, мӗншӗн вӑрлӑха кӑвакартса янӑ? Ӑҫта хариспандит?" – "корреспондент" сӑмаха пӑсса каласа хурать Калаков. Ҫав вӑхӑтра колхоз представителӗсен хшшинче Палтиел-Патирек тутарӗ тухса ҫапла сӑмах хушать: "Абый, ан вӑрҫ-ха эс, эпӗ Харис Бандит мар, Харис Хайруллов. Эпӗ кладовщик те мар. Кладовщикре кунта Мансур Халитов ӗҫлет". Хӗрсе кайнӑ Калаковӑн ҫилли иртмест-ха. "Мана Халитов та, Харисов та кирлӗ мар. Мана Харис Бандит кирлӗ!" – кӑшкӑрсах калать вӑл. Ҫакӑн хыҫҫӑн кӗлетри ытти тутарсем чӑтса тӑраймаҫҫӗ, хӑйсен ялӗнче Харис Бандит ятлӑ-хушаматлӑ этем ҫуккине ӑнлантарма тытӑнаҫҫӗ. Сасартӑк кӗлете темӗн сӑлтавпа комиссирен уйрӑлса кайнӑ Арсений Бараев – районти "Коммунизм ҫулӗ" хаҫат корреспонденчӗ – хашкаса пырса кӗрет. Хӑйне ӑнланманнипе тарӑхса ҫитнӗ Калаков чӑмӑрне чӑмӑртаса Бараева кӑтартать те кӗлетри халӑха урама талкӑштарса илсе тухать.

ХĔР АЧА АШШĔНЕ ШЫРАМАН

Вăрçăран Леонов вăйлă аманса таврăннă. Снаряд ванчăкĕ пырса тивнипе хăрах куçлă тăрса юлнă, суран унăн питне сăнсăрлатнă. Сылтăм куçне вăл яланах хура çыхăпа хупласа çӳренĕ.

Унчченех парти ĕçĕнче тăнăскере фронтран таврăнсанах партин Куславкка райкомĕн пĕрремĕш секретарьне суйлаççĕ. Малтанласа хваттер çук пирки Леонов çемйине хăварса райцентра пĕчченех пырса вырнаçать. Темиçе уйăх хăйĕн кабинечĕ çумĕнчи пĕчĕк пӳлĕмре выртса-тăрса пурăнать.

Райком çуртне-йĕрне Кулине ятлă тăлăх арăм çуса-тасатса тăнă. Кĕтмен-туман çĕртенех Кулине йывăр çын пулни палăрнă. Вăхăт нумай та иртмен – вăл хĕр ача çуратса панă. Çăмăлланнă çын патне райкомпа райĕçтăвкомра ĕçлекен хĕрарăмсем кашни кун тенĕ пекех пырса çӳреме пуçланă, "çĕнĕ кайăка" курса савăннă, амăшне ырлăх-сывлăх суннă. Çапли çапла та, анчах тем самантра райцентрта Кулине хĕрĕ чат Леонов сăнлă, куçĕ çинче хура çыхă кăна çук текен хыпар сарăлнă. Çаврăнса çӳресен-çӳресен ку сăмах Леонов хăлхине те пырса кĕрет. Райком секретарĕ нимĕн те шарламасть, райĕçтăвком председательне чĕнсе илсе хăй валли виçĕ кунта хваттер хатĕрлеме хушать. Виççĕмĕш кунĕнче райĕçтăвком председателĕ Леонов кабинетне хваттер ордерĕ илсе кĕрет, эрне вĕçĕнче райком секретарĕн çемйи тĕп хуларан райцентра куçса килет.

Кулине хĕр ачин ашшĕне шырамалла пулмасть. Тăлăх арăм райком конюхĕпе Ехремпе туслă пулнă-мĕн. Ачине те унпах çуратнă. Конюх вăл вăхăтра авланман ват хусах шутланнă. Пепке икĕ уйăх тултарнă тĕле Кулинепе Ехрем туй туса ирттернĕ, хăйматлăх пулма Леонова та чĕннĕ.

ЫТЛА ТА ХЫТĂ ХИСЕПЛЕНИПЕ

Иккĕшĕ те пĕр шкултах ĕçлетчĕç. Пĕри – пуçламăш шкул заведующийĕнче, тепри – çав ялти каçхи çичĕ çул вĕренмелли шкул директорĕнче. Пуçламăш шкул пуçлăхне Илларион Федорович тесе чĕнетчĕç, каçхи шкул директорне ашшĕ ячĕпе Николай Трофимович тесе хисеплетчĕç. Иккĕш те Аслă Отечественнăй вăрçă вутĕнче пиçĕхнĕ çынсемччĕ, çемьеллĕ, ача-пăчаллăччĕ.

Уявсене яланах пĕрле ирттеретчĕç. Майăн 9-мĕшне ун чухне праçник вырăнне хурсах паллă туман, Совет Çарĕн кунĕнче, нарăсăн 23-мĕшĕнче, кĕрекене ларни пулкаланă. Кĕрсе лараççĕ çапла пĕр çулхине Совет Çарĕн кунне паллă тума Илларион Федоровичпа Николай Трофимович кĕрекене. Пĕр черкке, икĕ черкке пушатаççĕ.

Вăрçăра çапăçнине аса илсе калаçаççĕ. Тата та икĕ хут черкке çĕклеççĕ. "Вăрçăра эпĕ лейтенант, эсĕ сержант çеç пулнă", – сăмах хушать Илларион Федорович. "Ун вырăнне эсĕ халь заведующи анчах, эпĕ – директор", – парăнасшăн пулмасть Николай Трофимович. Сăмах çине сăмах – хирĕçӳ тухса каять. Фронтовиксем тытăççах ӳкеççĕ. Николай Трофимович Илларион Федоровичăн тутине çыртса çурать, Илларион Федорович Николай Трофимовичăн хăлхи çунаттине татса илет.

Çапла вара туссем пĕри çурăк туталлă, тепри татăк хăлхаллă пулса юлаççĕ. Килĕшессе иккĕшĕ те тепĕр ирхине килĕштереççĕ. Кĕвĕçекенсем пур-çке пирĕн хушăра. Директорпа заведующи хушшинчи пăтăрмах пирки çав эрнерех ронона хыпар çитет. Иккĕшне те чĕнтерет роно пуçлăхĕ хăй патне, тĕпчет, ыйтса хăшкăлтарать. "Пĕр-пĕрне ытла та хытă хисепленипе пулчĕ çак пăтăрмах", – тет Николай Трофимович. "Тĕрĕс!" – тути шыçса ларнипе урăх сăмах кăлараймасăр çирĕплетет Илларион Федорович.

КИРЕМЕТРЕН ПУРТЕ ХĂРАНĂ

Ĕçĕ ку халь мар, пĕр 20 çул каярах пулса иртнĕччĕ. Вăл вăхăтра Комсомольски районĕнчи "Заветы Ильича" (халĕ "Труд") тата "Дружба" колхозсен çĕрĕсем чикĕленнĕ вырăнта темиçе çĕр çулти юман ларатчĕ. Ку юмана таврари чăвашсем Киремет йывăççи тетчĕç, унăн айĕнче вак укça сапаланса выртатчĕ, аялти турачĕсем çинче ал шăлли, сурпан вĕçĕ çакăнса тăнине те курма пулатчĕ.

1979 çулхи вăйлă сивĕсене пула юман нихçан чĕрĕлмелле мар хăрса ларчĕ, тăвата-пилĕк çул иртсен тӳнсе кайрĕ.

Пĕррехинче çав тӳннĕ паттăр патне район пуçлăхĕсем тата республикăран çĕрпе мĕнле усă курнине тĕрĕслеме килнĕ комисси членĕсем пырса тухаççĕ, йывăç йĕри-таврашĕнче

акăнман лаптăк юлнине тупса палăртаççĕ. “Виçĕ кун хушшинче ку вырăна çĕрĕк-çарăкран тасатăр!” – хушу парать комисси председателĕ. “Дружба” колхоз председателĕ Абзал Феткуллин йăх-йăх кулса илет. “Заветы Ильича” хуçалăх пуçлăхĕн Иван Черновăн вара ĕнсине хыçма тивет: хăрăк юман вăл ертсе пыракан колхоз çĕрĕ çинче выртать-çке-ха. “Мда, çăмăл пулмасть мана ку ĕçе пурнăçлама”, – хăвăрт тавçăрса илет вăл.

Юман юлашкийĕсене турттарса тухса çырмана кайса тăкас пирки вăл малтан тĕп усадьба вырнаçнă Аслă Чурачăк çыннисемпе канашласа пăхать. “Иван Иосифович, эсĕ хушнă хăть мĕнле ĕçе те пурнăçлама хатĕр эпир, анчах Киремет йывăççипе пин тенкĕ парсан та çыхланмастпăр, хăратпăр”, – теççĕ чурачăксем.

Колхоз пуçлăхĕ юнашар тутар ялне – Чĕчкене каçать. “Чăваш Киреметĕнчен усалраххи нимĕн те çук, çыхланмастпăр ку ĕçпе”, – хуравлаççĕ Чĕчкен мишерĕсем.

Иван Чернов аптăраса ӳкмест, “Дружба” хуçалăхри тутар Эльпуçĕнчи мишерсем патне кĕрлеттерсе çитет. Лешсем те юмана турттарса тухма килĕшмеççĕ. Салхулланса çитнĕ Иван Иосифович парторганизаци секретарьне Александр Лукиянова бюро членĕсене пуçтарма хушать. Çав каçах коммунистсен бригади çĕре Киреметрен тасатать, ирхине вырăна кайса пăхнă хыççăн Иван Чернов ял хуçалăх управленийĕн пуçлăхне Зинаида Орловăна комисси председателĕн хушăвне пурнăçлани çинчен телефонпа шăнкăравласа пĕлтерет.

ĂШ ÇУНТАРМĂШ ТЕЛЕФОН

Влаçра ларакансем нумай ĕçе телефонпа усă курса татса пама тăрăшаççĕ. Ку ĕлĕк те çаплаччĕ, халĕ те çавнашкалах.

Ĕçĕ ку иртнĕ ĕмĕрĕн аллăмĕш çулĕсен пуçламăшĕнче пулнă. Компартин Чăваш обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Тимофей Аркадьевич Ахазов ир-ирех хăйĕн кабинетĕнче çур аки ĕçĕсем мĕнле пынипе паллаштаракан сводкăна пăхса ларнă. “Да-а, ĕçсем чаплах мар. Акас енĕпе кăнтăрти Чкалов (хальхи Патăрьел) районĕ кая юлса пырать. Кăштах тăн кĕртсе илем-ха Юлдашева”, – шухăшлать те Ахазов партин Чкалов районĕн секретарĕпе çыхăнас тесе телефон кĕпçине

ярса тытать.

Ун чухне телефон ҫыхăнăвĕ хальхи пек пулман. Шупашкар телефонистки Патăрьел телефонисткипе ҫыхăннă, ҫавăн хыҫҫăн ҫеҫ Ахазовăн Юлдашевпа калаҫма май килнĕ.

Акă вĕсем пĕр-пĕрне сывлăх сунаҫҫĕ, вара Тимофей Аркадьевич Кадыр Каюмовичран ҫурхи ĕҫсем мĕншĕн чăхăмланине ыйтса тĕпчеме пуҫлать.

– Илтĕнмест! Нимĕн те илтместĕп! Хытăрах калăр! – хуравлать Юлдашев.

Ахазов темĕн пек кăшкăрса калаҫсан та Юлдашев нимĕн те илтмест. Юлашкинчен ун пуҫне пĕр чее ăс пырса кĕрет.

– Кадыр Каюмович, эсир путевка пама ыйтса ҫырнăччĕ. Путевка килчĕ. Сирĕн Крыма канма каймалла пулать, – сассине чылаях пусарса хыпарлать Ахазов.

– Хăҫан тухса каймалла? – ыйтать хăй пăтăрмаха кĕрсе ӳкнине туйса илеймен Юлдашев.

Вара ҫур сехет ла-й-й-ăх тăн кĕртет Ахазов хăлхи йăлтах уҫăлса кайнă Юлдашева.

Телефон мыскарисем, чăнах та, пурнăҫра сахал мар пулса иртеҫҫĕ. Акă тепĕр истори. 1978 ҫулхи ҫурла уйăхĕн вĕҫĕнче Петр Николаевич Теплова КПСС Комсомольски райкомĕн пĕрремĕш секретарьне суйлаҫҫĕ. Ĕҫлеме тытăнсанах вăл райцентртан ҫирĕм ҫухрăмри “Урожай” колхоза тухса каять. Парткомра пулнă хыҫҫăнах колхоз председателĕ патне кĕрет, Валентин Терентьевич Шакмаковпа калаҫма тытăнать. Вунă минут иртет-и, иртмест-и – председатель кабинетне партком секретарĕ Иван Фадеевич Мулгачев кĕрсе тăрать, Теплова парткомри телефон патне чĕнтерни ҫинчен хыпарлать.

– Теплов итлет, – телефон трубкине тытса хуравлать Петр Николаевич.

– Кăна Холоднов чăрмантарать-ха, – илтĕнет леш енчен.

– Мĕн, эсир йĕкĕлтес-мăшкăллас тетĕр-и? – хăвăрт ҫиллленсе- кӳренсе каять Теплов.

– Йĕкĕлтесе мар, манăн хушамат, чăнах та, Холоднов. Нĕркеҫ шкулĕн директорĕ эпĕ. Васкавлă ĕҫ сиксе тухрĕ. Ҫавăнпа Сирĕн пата шăнкăравлас терĕм, – тет Холоднов.

Петр Николаевич Теплов Холодновран каҫару ыйтать, ĕҫ ҫинчен каласса илеҫҫĕ.

ИНКЕК ТӐСМЕСĔР ТЕЛЕЙ КУРАЙМĂН

Патăрьел тăрăхĕнче Карягинсене лайăх пĕлеççĕ. Вĕреннĕ çынсем, ăслă çынсем. Сергей Афанасьевич пирки те çавнах каламалла. Вăтăр пилĕк-хĕрĕх çул каялла вăл çак районти "Гвардеец" колхозра партком секретарĕ пулса ĕçленĕ. Районта ăна лайăх пĕлнĕ. Çынсемпе часах пĕр чĕлхе тупма, селĕм доклад тума пултаракан çынна часах парти райкомĕн иккĕмĕш секретарĕ пулма шанаççĕ. Сергей Афанасьевич Патăрьелĕнче хваттер илет те райцентра çемйипех куçса килет. Ялта унăн пӳрт те пулнă-мĕн. Çак çурта сутма тивет. Патшалăх шучĕпе хваттер илнĕ Сергей Афанасьевичăн çурт сутнă укçан пĕр пайне хыснана хывмалла пулнă-и, мĕн-и – курайман çынсем Карягина тапăнма пуçлаççĕ, иккĕмĕш секретарьтен катертме сăлтав шыраса тупаççĕ-тупаççех. Çакăн хыççăн Сергей Афанасьевич темиçе районпа "Коммунизм ялавĕ" (халĕ "Хыпар") хаçатăн корреспондентĕнче ĕçлерĕ. Республикипех палăрма пуçларĕ, çичĕ-сакăр çултан Шупашкара куçса килсе çак редакцирех пай пуçлăхĕнче вăй хучĕ. Вăл çырнă статьясемпе очерксене вулакансем паян та астăваççĕ. Раççей Федерацийĕн культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Сергей Афанасьевич Карягин халĕ тивĕçлĕ канура пулсан та республикăри "Астăвăм" кĕнекене редакцилесе кăларас тĕлĕшпе ĕçлет.

Кам пĕлет, ялти çурт-йĕр сутти пирки пăтăрмах сиксе тухман пулсан Сергей Карягинăн паян та Патăрьелĕн хура тăприне (Петĕр Хусанкай çапла çырнă) çăрма тиветчĕ пулĕ. Кунта парти райкомĕн секретарĕ пулнă çынсем пурте тенĕ пекех халĕ те райцентрта пурăнаççĕ. Сергей Афанасьевич – тĕп хула çынни, паллă журналист. Ахальтен мар ĕнтĕ: "Инкек тӳсмесĕр телей кураймăн", – теççĕ.

"ÇĔР ВЫРТМАЛЛАХ ПЫРĂПĂР"

1980-мĕш çулсен пуçламăшĕ. Партин черетлĕ съезчĕ иртнĕренпе çулталăк та çитеймен-ха. КПСС Комсомольски райкомĕн бюровĕнче "Знамя" колхозри партком секретарĕ Алексей Иванович Михайлов съезд хыççăн курăнакан агитацие епле йĕркелени çинчен доклад тăвать. "Съездăн тĕп ыйтăвĕпе йышăннă решение пĕтĕмпех планшетсем çине вырнаçтартăмăр. Планшечĕсемпе çынсем йышлăрах

паллашчăр тесе Шупашкартан Елчĕке каякан çул хĕррине тухса лартрăмăр", – хавхаланса каласа парать парторг. "Ан васка-ха, чăх сăхса пĕтермелле мар хăвăрт калаçатăн. Куртăм эп санăн планшетусене Елчĕке кайнă чухне. Мăкăнь вăрри пек пĕчĕк сас паллисемпе çырнă эс вĕсене. Кĕт! Съезд решенийĕсемпе паллашма сирĕн ял вĕçне çĕр выртмаллах пырăпăр тенĕччĕ-ха хамăр парторгпа. Хунарне те хатĕрлесе хунă!", – калаçма чарать докладчике бюро членĕ, "Заветы Ильича" колхоз председателĕ Иван Иосифович Чернов.

Алексей Иванович кăмăлсăрланать. "Хăвăр хушатăр та кайран хăвăрах вăрçатăр", – мăкăртатать вăл райкомăн иккĕмĕш секретарĕ çине пăхса.

Чернов та, Игонин та урăх нимĕн те шарламаççĕ. Бюро ларăвĕ малалла тăсăлать.

Федор КОМАРОВ

Сана ят-сумлă Геннадий Уткина,
Ялан хисеплĕç, çирĕп ут кăна.
Ах, шелсĕр вăхăт ыткăнать те ыткăнать,
Чун-чĕрене хĕссе, илет йăлт тыткăна.

Çапах, пуçа усса пăхмастпăр каялла.
Ырра шанса, утатпăр малаллах.
Калатăр: çырасси – ман ĕç, ман тивĕç
Хальхи пекех пул ăслă, тӳрĕ, çивĕч.

Кăлавасем те шăкăрин чĕтреччĕр
(Хаçат чысне çĕклеймĕн çав пĕр тертсĕр).
Анчах нихçан ан хуçтăр суд-тӳре
Кам тĕрĕсси вăл курăнать тӳрех.

Аллă çулна та чыслăн палăртасчĕ,
Саламлама кĕрекене лартасчĕ.
Сана валли ыр кун пурах-тăр туррăн,
Тепĕр çулччен чипер те сывă пурăн.

Октябрь, 3. 1994 ç.
Шупашкар.

ТУПМАЛЛИ

КАЛАВСЕМ
Кантăк умĕнче 4
Хĕлип мана хăна турĕ....................5
Сюрприз....................7
Çапла хупларăм арăм çăварне....................9
Чĕнми шăрчăк 11
Сыснапа йысна....................15
ШЎТСЕМ
Пĕç хошши апачĕ 21
Карчăксем качча каясшăн 23
Килте ĕçлекен кирлĕ 26
Калпаклă Чапань 28
Чăваш поэчĕ хăрăк турат мар 30
ПУЛНИ-ИРТНИ
Ирхи марафон 33
«Ни фига та чакмастпăр» 34
Кантăкран кантра ярса 35
Вун иккĕ çапсан....................36
Вăрмар лайăх-и, Вăрнар лайăх-и? 36
Отставкăна тухас умĕн 37
Камăн мĕн шухăш 38
Çăхав çырнин усси çук 39
Начар карта та тăман....................40
Секретарьсене шăшисем те итленĕ 40
Кăмпана кайсан 41
"Сылтăмалла пăрăн, сулахаялла тыт" 41
Ĕнер пуçлăхра Сарă Павăлччĕ, паян – Хура Макçăм 42
Лермонтов тата сунар йыттисем 43
Ача пăхма кайсан 43
Пикшикре те пулман, Пукăртана та пыман....................44
Ресторанти пăтăрмах 46
Вылямасăрах мат лартнă....................46
Егор Гайдар тата Шалин атăçă 47
Антоний Медведевăн çутă ĕмĕчĕ 48
Хура пичкери хĕрлĕ тавар....................49
Çухалнă чĕн йĕвен....................50
Иккĕн пĕр кăмака умĕнче....................51
"Эп Харис Бандит мар, Харис Хайрулов!" 52
Хĕр ача ашшĕне шыраман 53
Ытла та хытă хисепленипе....................53
Киреметрен пурте хăранă 54
Ăш çунтармăш телефон 55
Инкек тўсмесĕр телей кураймастăн....................57
"Çĕр выртмаллах пырăпăр". 57

Уткин Геннадий Алексеевич

КАНИТЕЛЬ

Рассказы, юморески, быль на чувашском языке

В авторской редакции.
Художник Эктель В.П.

Сдано в печать12.07.2005 г. Формат 84х108 1/32
Гарнитура Ариал. Бумага офсетная.
Усл. печ. л. 3,15. Тираж 500 экз.

Издательство "Калем"
428022, г.Чебоксары, ул. П.Лумумбы 14, тел. 63-64-98
Лицензия № 030927 Госкомпечати РФ от 10.09.99 г.

20